31-164

Ст. ЛАШМАН

93

# АХĂРСАМАНĂ

4 пайлă

САТТИРĂЛЛĂ
КОМЕТИ

ЧУВАШ АЯ
КН ЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебо-сары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

Хакĕ 30 пус

ÇĂВАШ кĕнеки УЙРĂМĔ
Шупашкар 1931 çул

СТ. ЛАШМАН

# АХӐРСАМАНА

4 ПАЙЛӐ САТТИРӐЛЛӐ
КОМЕТИ

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебо...р. Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25.

ҪӐВАШ КӖНЕКИ УЙРӐМӖ
Шупашкар — 1931

Чебоксары типография № 1
Тираж 2.500 экз.
Чувашлит № 1102
Заказ № 2312
$1^1/_2$ п. л.

## Авттăртан пĕрик сăмах.

„Ахăрсаманара“ ҫыракан колхос йухăмне ӳсме ҭаракан вăйсене кăтартасшăн пулнă. Саттирăра, пĕр йенҭе кулаксемпе вĕсен ĕҫĕнҭе туса пыракан „р-револҭуҫиллĕ“ „сулахайпа“ сылтăм оппортунисем йевĕрлĕ ҫынсем, тепĕр йенҭе—ҭăн колхосшăн ҫунакан ҭухăнсемпе вăтамсем. Саттирăра кулаксемпе вĕсен акĕнҭĕсем — оппортуниссем ҭухăнсемпе вăтамсене колхосран пистересшĕн тăрăшнине кăтартнă. Ҭухăнсемпе вăтамсем хуларан рапоҭҭи прикатă илсе килтерсе ҫеҫ кулаксенҭен хăтăлма пĕлнĕ. Вара тин ҭухăнсемпе вăтамсем ҭăн пĕрлешӳллĕ хуҫалăх, колхос туса хураҫҫĕ.

„Ахăрсамана“ саттирăлла кометире кулаксемпе оппортуниссенҭен мăшкăласа кулнă. Пуринҭен ытла, партти ҫулйĕрне пăсакан, кулак акĕнҭĕ пулса ĕҫлекен оппортуниссене саттирă куллипе хĕрӏнĕ.

Парттин тĕп ҫулйĕрне пăсакансем, сылтăм тата «сулахай» оппортуниссем кулак акĕнҭĕсем пулса тăраҫҫĕ. Партти вĕсемпе кĕрешет, вĕсене ҫул ҫинҭен сиӏсе пырай̆.

«Ахăрсамана» саттирăлла кометийе колхос йухăмĕнҭе малашне кулаксемпе оппортуниссем, парттин тĕп ҫулйĕрне пăсакансем ан пулҭҭăр, тенĕ шухăшсемпе ҫырнă. Ҫак шухăшсем кометийе ҫырнă ҭухне ҫыраканăн тĕп шухăшсем пулнă.

«Ахăрсамана» кометийе стсенă ҫинҭе лартас пулсан куракансене малтан саттирă ҫинҭен, ку кометийе мĕнле шухăшпа, мĕншĕн ҫырнине каласа парас пулай̆. Ҫакăнҫа пĕрлех колхос хумне ӳстересси ҫинҭен те каласа пани кирлĕ.

„Ахăрсамана“ пирки вулакан хăй шухăшне „Сунтал“ шурнал ҫине ҫырсан пит те лайăхҭĕ. ТАШМАН.

## КОМЕТИРИ ÇЫНСЕМ.

1. ТĂРЛАВ ВАÇКИ—çапкаланҫăк, хайне активис вырăнҫе шутлаканскер.

2. КĂНИХВАТ ЙАРКЕЙЁВ—Тăрлав Ваçкин пулăшаканĕ. Ёлĕкхи унтĕр.

3. ПЫРККОВ-ПУШКЁН—суйа активис.

4. ХĂЛАТ, НИКОЛАЙ ÇТЕППАНҪĂ—кулак.

5. ҪЁРĔ ÇВЕТТУЙ—йалти пуп. Йатне-мĕнне пĕлмеççĕ, пурте ăна Ҫĕрĕ çветтуй теççĕ.

6. ÇĂРТТАН ÇИТĂРĔ—поткулаҫнĕк, љумпĕн-пролеттари.

7. ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ—йалти тăлăх арăм. Тĕн сĕрĕмĕпе антăранăскер. Поткулаҫнĕк.

8. ЛЫККĂВ—йалсовет пуçлăхĕ.

9. ПАРАНКĂ КУÇМИ—вăтам хресҫен.

10. ИÇМАССА ХВЕТЕРĔ—старик, ҫухăн хресҫен.

11. ÇИВĔҪĔ ПЕРО—йалкор.

12. ПРИКАТИР—рапоҫҫи.

13. ПРОККУРОР.

14. 1-мĕш ХĔРАРĂМ.

15. 1-мĕш КАРҪĂК.

16. 2-мĕш КАРҪĂК.

17. СТАРИК.

18. ҪУХĂН.

19. ХАЛĂХ: стариксем, карҫăксем, арçынĕ, хĕрарăмĕ, аҫипăҫи,—ҫухăнсем, вăтамсем.

## 1-мĕш пайĕ.

Теккоратсн. Урам. Йалсовет умĕ. Çакăнтах пушар сарайĕ.

I.

Халăх пăтраннă. Ватти-вĕтти, арçынĕ-хĕрарăмĕ, карђăкĕ-старикĕ—йалсовет умĕпе унталла та кунталла ђупаççĕ. Пурте йапаласем йăтнă: хăшĕ тӳшек, хăшĕ сăмавар, хăшĕ квасђĕресĕ. Пурте васкаççĕ, пашкаççĕ, тараççĕ.

1-мĕш КАРЂĂК. Кăркка аçи пекех хăлтăртатса çӳрет, тет. Пĕђĕкçĕ-куçĕ хăйĕн хăнтăла пек хĕрлĕ, тет. Йăкăлт-йăкăлт сиккелет, тет хăйĕн шыçмак хыçĕпе...

2-мĕш КАРЂĂК. Васпати, васпати, каçар пирĕн çылăхсене. Ахаљ мар çав кăçал çулла пирĕн арпалăх хыçĕнђе çуллен шурă ђеђек кăларакан мăйан курăкĕ хĕрлĕ ђеђек кăларђĕ... Ырра мар çав пулнă.

1-мĕш КАРЂĂК. Хăй ват тилĕ аçи пек ђейе, тет.

2-мĕш КАРЂĂК. Ан калаçах ĕнтĕ тархасшăн... Ахаљ те хавшак та, ку тата пĕтĕмпех пĕтерђĕ. Ей, тур-тур-тур... Кайам-ха, кайам, тăхлађă.

II.

СТАРИК. Шĕшлийе, шĕшлийе ђикрĕне, каттăрщнăй.

КАРЂĂК. Ăçтан пĕлем-ха епĕ сан шĕшлийе? Хăй таçта хурăт те.

СТАРИК. Халех ђупнă пултăр шĕшлĕ илме.

КАРЂАК. Ӑҫтан тупам-ха епӗ ӑна?

СТАРИК. Хӑвӑртрах, хӑвӑртрах. Мӗн тата, ҫӑмарта тума аптранӑ ђӑхӑ пек вӗђӗлтетсе ҫӳретӗн.

КАРЂӐК. Каймастӑп.

СТАРИК. Е, каймастӑни?!

КАРЂӐК. Хурах! Вӗлереҫҫӗ! Ђим-ха, ђим-ха, шӗшлӗ аллунтах-ҫке!

СТАРИК. У, мурилешшӗ! Аӗа ђупар хӑвӑртрах.

## III.

1-мӗш ХӖРАРӐМ (йӑвӑрскер, аллинђе ађа, аркинђен тата тепри сӗтӗрӗнсе пыраӗ). Кирук! Ваҫҫа! Пеӗӗа! Алтатти! Праски! ӑҫта йултӑр, мурсем! Ђупӑр хӑвӑртрах. Кирук, Праски, Ваҫҫа, Пеӗӗа, Алтатти!..—хӑвӑртрах... (пӑхкалаӗ). Мур пӗтертӗр ӗнтӗ, пӗр кӗтӳ ҫуратса йанӑ та, пӑхса та ӗлкӗрме ҫук... Мур илсе каймӗ-ха, ђупас... Кайсан та шел мар тата. (Хыпаланса тухса кайаӗ, ђылай вӑхӑтран ађасем иртме пуҫлаҫҫӗ).

7 ҪУЛХИ АЂА. Анне! (йӗрсе ђупса иртсе кайаӗ).

8 ҪУЛХИ АЂА. Анне!

9 ҪУЛХИ АЂА. Анне!

10 ҪУЛХИ АЂА. Анне!

1-мӗш АРҪЫН. Петӗр, Иван, Симук ђупӑр есӗр малтан. Ура айне анђӑк ҫури пек кӗрсе ан ҫӳрӗр. Прыҫ, прыҫ, Иван. Еп сана, Симук... Ђимха, куккисем патне ҫитер. У, мошшенниксем! Сире пула ђи кайа йултӑмӑр (тухса кайаҫҫӗ).

## IV.

Виҫӗ старик, виҫӗ карђӑк, пӗр ушкӑн халӑх ђупса иртеҫҫӗ.

## V.

Хăлатпа Ђĕрĕ çветтуй кĕрсе йалсовет кĕнђелерĕн кĕтессисем хыçне пытанаççĕ.

ХĂЛАТ (кĕтесрен пуçне кăларса). Шатун! каланă сана пĕрре. Ку йапала пылпа кулађ çини мар вăл. Асту!..

ЂЕРĔ ÇВЕТТУЙ. Кукăр Çимунран каласа йатăм... Килепех, тенĕ. Мĕн мана?

ХĂЛАТ. Самолђђи, хура çăхан...

ЂЕРĔ ÇВЕТТУЙ. Пета санпа, Никколай Çтаппанђă. Ним туса та киллентерме çук.

ХĂЛАТ. Молђђи.

## VI.

Купăс каласа Çăрттан кĕрет.

ÇĂРТТАН (й у р л а с а).

Ани, ани куккурус,
Ăна вырат̆ пĕр вырăс,
Ытла ăшĕ çунсассăн
Туртса йарат̆ паппирус...

Ей! кулђай наша. Сторониç. Навос полçот.

Çăрттан Çитăрĕ килет. Çăртан Çитăрĕ нихăçан та хуйхăрмаст̆. Ăна пурте тикĕс.

Ни тĕрме,
Ни çĕрме,
Ни çурт,
Ни ђурт, тенĕ пек еп нимрен те хăрамастăп. Ей, кулђай ты, наша сторона!

(Т а ш л а с а и л е т).

## VII.

ХĂЛАТ (п у ç н е к ă л а р с а). Ç ă р т а н! Кил кунталла!..

ÇĂРТТАН. А, Хăлат Кулаккову, мойе поштени!

ХĂЛАТ. Шăппăн... Ерех кирлĕи?

ÇĂРТТАН. Ха-ха-ха! Калаçма пĕлет, шеремет. Хăй сăмахне тăхлан шăратса хунă пек шăратать. Тавай, кулак, ерехне...

ХĂЛАТ. Ей, Ђĕрĕ çветтуй, хăвала кунталла.

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Ашшĕин, ывăлĕин, çветтуй сывлăшĕн йађĕпе... Ĕмĕр пеххиллĕ пул, ывăлăм...

ÇĂРТТАН. Ха-ха-ха! Ха-ха-ха! Ха-ха-а! Тукатмăшсем, вĕриçĕленсем, кусем манран та ăслăрах. Пеххиллĕ пул. Ай, ђăтаймастăп, ђăтаймастăп, тавайăр хăвăртрах ерекĕре (кĕленђинђенех ĕçет).

ХĂЛАТ. Асту, каланă пек пултăр. Сана тӳрех колхос правлени ђленне.

ÇĂРТТАН. Мĕн калаçмалли пур, каланă сана пĕрре.

ХĂЛАТ. Йурать, йурать, ђуп еппин.

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Ес, ывăлăм, пире те стариксене ан ман. Пурте турă айĕнђе çӳретпĕр.

ÇĂРТТАН. Пуťťе спокойны, Çăрттан Çытăрĕ ырра манмасť вăл, паťťушкă...

Ани, ани куккурус,
Ăна вырать пĕр вырăс...

Ей, куљай наша сторона! Çи, ĕç, савăн, ташла, Çăрттан Çитăрĕ...

(Тухса кайать).

## VIII.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. Таса атте, таса атте, ăçта есĕр?

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ (тухса). Ашшĕин, ывăлĕин, çвет-

туй сывлăшĕн йађĕпе... Ну мĕнле ĕçсем, турă ђури Сăпани?

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. Калама çук лайăх. Пĕтĕм хĕрарăм пăлханаť. Пĕтĕм карђăк сĕрлет. Пурте ахăрсамана кĕтеççĕ. Ес каланă пекех турăм, таса атте.

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Ĕмĕр сăваплă пул, Сăпани. Çўлти патшалăхра сана турă манмĕ унпăн. Пиллетĕп сана, турă ђури.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. Халĕ те, йаланах, малашне те ĕмĕр ĕмĕрех, амин.

ХĂЛАТ (т у х с а). Ђиркĕве хупасшăн, ђанĕсене антарасшăн. Турăшсене çунтарасшăн. Асту, Çветтуй вота шывĕ.. Антихрис çитнĕ. Йулашки кунсем пурăнатпăр.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. Çапах, Никколай Çтаппанђă, сахалтарах вĕт.. Пĕр пăт вăл мана пĕр уйăха кăна.

ХĂЛАТ. Çуркунне акă çĕрўсене сухаласа парăпăр.

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Ес, Сăпани, кирлĕ маррине калаçса ан тăр. Никколай Çтаппанђă пурăнтăр те, вăл пулсан, хырăму та тутă, çийў та питĕ пулĕ. Каланине çеç ту есĕ.

ХĂЛАТ. Пулђĕ. Çитĕ. Кустар ху вырăнна, Çветтуй вота шывĕ.

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Кустар, кустар, Сăпани.

(Ç в е т у й  в о т а  ш ы в ĕ  т у х а ť).

IX.

ХĂЛАТПА ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ (п ĕ ђ ђ е н е х).

ХĂЛАТ. Сана колхос штђеттовотне. Малтан çўçне кастарăпăр...

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Ман хамăн пĕртте кĕрес килмест унта. Тата ват пуçăмпа мĕнле çўçе кастарас...

ХĂЛАТ. Касасса касатпăрах ĕнтĕ, ун çинҫен калаçса та ан тăр. Ăна Раман Каврилҫҫăсем те, Йакур Никифăрҫăсем те çаплах калаĭă. Касас пулаĭ.

ҪЕРĔ ÇВЕТТУЙ. Ну, апла пулсан, хирĕçсе тăмăп.

ХĂЛАТ. Шҫеттовота кĕрсен, есĕ пурне те пăтратса йар. Мала çырас вырăнне хыçала çыр, хыçалтине мала, варринҫине—хыçала та, мала та...

ҪЕРĔ ÇВЕТТУЙ. Ей тур-тур-тур, ку саманапа тем курăн. Ҫăнахах та ахăрсамана.

ХĂЛАТ. Турă çинҫен те, тĕн çинҫен те есĕ, асту вĕсем майлах çаптар. Атту ĕненмĕç. Песпошнĕка çырăн.

ҪЕРĔ ÇВЕТТУЙ. Тата ку çитмерĕ.

ХĂЛАТ. Хĕрес çине те хăпарса таптама тивĕ.

ҪЕРĔ ÇВЕТТУЙ. Воспоти, воспати, каçар çылăхсене (к ĕ л ĕ т ă в а ĭ).

ХĂЛАТ. Çитĕ анкă-минкĕленме. Ну, Ҫĕрĕ Çветтуй, асту, ĕçне тĕплĕ ту. Унта пăхăпăр кам кама çĕнтерпине. Йе пире, йе епĕр! Йе вилĕм, йе пурнăç! Аĭа ман пата хăнана. Унта тата тĕплĕрех пуплĕпĕр.

(Т у х с а к а й а ç ç ĕ).

X.

1-мĕш КАРҪАК. Кăркка аçи пек хăлтăртатса çӳрет, тет. Пиҫĕ куçĕ хăйĕн хăнтăла пек хĕрлĕ, тет. Икĕ мăйрака, тет, кăҌт çеç тăратса тăраççĕ, тет çамки çинҫе. Хӳри пур, тет, пĕҫĕкçеççĕ, çăмламас....

ХĔРАРĂМСЕМ. Васпати, васпати...

1-мĕш КАРҪАК. Килет, тет те, тӳрех ҫиркĕве. Турăшсене çĕмĕрет тет, ҫанĕсене касса антараĭ, тет. Пире, турра ĕненекенсене, пурне те пиҫет çапса пĕр картана хуса кӳртет, тет...

ХĔРАРĂМСЕМ. Пĕтрĕмĕр, пĕтрĕмĕр. Амуниççи те тухмастшим вара?..

1-мĕш КАРҪАК. Нимĕнле амуниççи те çук, тет.

ÇĂРТАН ÇИТĂРĔ (кĕрсе). Што са шум, а тракки нет... Расойтиç... Стреҫаҭ путу... (Хĕрарăмсем тухса тараççĕ) Ха-ха-ха! Ахăрсамана! Тупнă ахăрсамана! Антихрис килет. Пăтранҫăк шывра лайăх-çке пулă тытмашкăн... Атми çеç пултăр.,,

Шур Атăлта пулă ҫăмаҭ, ҫăмаҭ,
Хӳри вĕçне шыва тивертмест...
Ех, кармуҥăм, пĕр кармуҥăм...

(Йурласа тухса кайаҭ).

## XI.

Тăрлав Ваçки, Кăнихват Йаркейĕв, Пыркков-Пушкĕн кĕреççĕ.

ТĂРЛАВ. Ҽупуйу минуту хатĕр епĕ сире пулăшма. Но тоҽкă, епĕ кăҽт шăхăрсан, коттовă пулăр йаланах... Епĕ сире йаланах хатĕр пулăшма...,. Ей, Йаркейăв, илтрĕни?

ЙАРКЕЙĔВ. Так тоҫнă.

ТĂРЛАВ. Миçе хут каланă епĕ сана апла калама йурамасҭ, тесе. Неуштă есĕ старăй решим пĕтнине маннă... Йаркейĕв, урăх есĕ апла ан кала.

ЙАРКЕЙĔВ. Так тошнă та çке-ха, анҫах никак ҫĕлхе çаврăнмасҭ. Никак çав ĕлĕкхи йăлана çĕнтерейместĕп.

ТĂРЛАВ. Пăрахас пулаҭ. Ху йалта первай активис шутĕнҫе тăратăн, ху кивĕ йăлапа, килĕшмест пĕртте.

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Пăрахаймасҭ ĕнтĕ вăл хăйĕн ҫирне. Асат хуçнă çынна тупăк çеç тӳрлетет

темеççĕи-ха! Ку та çавăн пекех. Ман шутпа, унпăн пĕртте хăрамалла мар, пирĕн çула çеç тытса пытăр. Ытти нимĕн те мар.

ТĂРЛАВ. Çаплине çапла та ха вăл, анђах йалĕпех колхоса куçнă çĕрте, çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте ку пĕртте килĕшмест. Вăл йăлана пăрахасах пулаť...

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Ниђђово. Тепĕр йенђен апла калани тен выраналă та пулĕ кунта.

ТĂРЛАВ. Йаркейĕв!..

ЙАРКЕЙĔВ. Йа, вашшĕ...

ТĂРЛАВ. Каллех есĕ...

ЙАРКЕЙĔВ. Так тошнă...

ТĂРЛАВ. Каллех так тошнăсем...

ЙАРКЕЙĔВ. Так тошнă...

ТĂРЛАВ. Йаркейĕв!

ЙАРКЕЙĔВ. Никкак нет...

ТĂРЛАВ. Мĕн никкак нет...

ЙАРКЕЙĔВ. Так тошнă...

ТĂРЛАВ. Мĕн как тошнă...

ЙАРКЕЙĔВ. Никкак нет...

(Иккĕшĕ те пĕр-пĕрин çине çапăçакан автансем пек пăхса тăраççĕ. Тăрлав аллине сулаť те лараť).

ТĂРЛАВ. Вот, ĕçлесе пăх кун пек активиссемпе, колхос ту, çĕнĕ пурнăç ту. Премă, аптăрамалла. Йаркейĕв!

ЙАРКЕЙĔВ. Никак нет, так тошнă, никкак нет, так тошнă...

ТĂРЛАВ. Пыркков-Пушкĕн, есĕ калаçса пăхха унпа. Ес пулмасан, ĕç те тухас çук.

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Йаркейĕв!

ЙАРКЕЙЁВ. Мӗн кăшкăратăн. Хуллентерех. Кăртавуй пек кăшкăрмалла мартăр. .

ПЫРККОВ-ПУШКЁН. Тăрлав Васкп санпа каласасшăн.

ЙАРКЕЙЁВ. Хам та пӗлетӗп.

ТĂРЛАВ. Халех..

ПЫРККОВ-ПУШКЁН. Халех...

ЙАРКЕЙЁВ. Халех... Ну малалла...

ТĂРЛАВ. А малалла ак çапла: ђӗнсе килес...

ПЫРККОВ-ПУШКЁН. Ђӗнсе килес...

ЙАРКЕЙЁВ. Ђӗнсе килес...

ТĂРЛАВ. Йалсовет пуçлăхне, Лыккăв йулташа...

ПЫРККОВ-ПУШКЁН. Йалсовет пуçлăхне Лыккăв йулташа.

ЙАРКЕЙЁВ. Лыккăв йулташа...

ПУРТЕ. Ха-лех ђӗнсе ки-лес йал-со-вет пуç-лăх-не Лыккăв йулта-ша...

ТĂРЛАВ. Йаркейӗв, ăнлантăни ӗнтӗ?..

ЙАРКЕЙЁВ. Так тошнă ӗнтӗ...

ТĂРЛАВ. Ну, шакăм марш, еппин. Хăвăртрах.

ПЫРККОВ-ПУШКЁН. Кала унта кас шашарит туђђăр.

ЙАРКЕЙЁВ. Мӗнле куç?

ПЫРККОВ-ПУШКЁН. Ну, хур—ђăвашла, а вырăсла куç... Куç шашарит туђђăр...

ЙАРКЕЙЁВ. Слушăйу приккас...

((Тухса кайаť).

XII.

Карђăксем. Хӗрарăмсем.

1-мӗш КАРЂĂК. Хăйӗн шыçмак хыçӗпе йăкăлтйăкăлт тăваť, тет.

ТĂРЛАВ. Мĕн кирлĕ сана! Ей?!

1-мĕш КАРҪĂК. Килнĕ, килнĕ, акă вĕсем...

(Пурте тараççĕ).

ТĂРЛАВ. Ку мĕн пулҫĕ-ха. Ытла аван калаçса пыраҫҫĕç. Сасартăк анкăминкĕленсе кайрĕç.

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Ха-ха-ха! Пĕр карҫăкĕ шурса-хуралса кайрĕ, вĕреçĕлен курнă тейĕн. Ха-ха-ха! Ҫикеленсе кайрĕ. Ха-ха-ха!

ТĂРЛАВ. Ним те пĕлместĕп. Йаркейĕв!

## XIII.

ЙАРКЕЙĔВ (кĕрсе). Йа...

ТĂРЛАВ. Хăвала хыçалтан. Пĕрне тытса кил.

ЙАРКЕЙĔВ. Слушайу. (Тухса кайаҭ, унтан пĕр карҫăка тытса килет).

КАРҪĂК. Антихрис, антихрис!.. Ик уралла кашкăр. Ҭхву! Ҭхву! йарăр мана, йарăр.

ТĂРЛАВ. Арестовăн! Ăçта сан паттент?! Çекретнăй сăмахсĕм кăшкăрма йурамасҭ... Тавай паттент!

КАРҪĂК. Йарăр мана, йарăр...

## XIV.

ЛЫККĂВ. Йалсовет пуçлăхĕ Лыккăв!..

ТĂРЛАВ. Песопраçи. Урам тăрăх кĕтĕвĕн-кĕтĕвĕн пăлханса çӳреççĕ. Мĕн пăхрăн есĕ. Кăмака çинҫе хуп турттартăни? Арестовăн!

ЛЫККĂВ. Мĕн еп. Еп аптăранă ĕнтĕ. Мĕн тăвас ман. Аҭăр унта куç шашарит тунăҫҫĕха. Унта калаçăпăр.

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Вăт ку ĕç.

ТĂРЛАВ. Карҫăка мунҫана.

(Пурте тухаççĕ).

## 2-мĕш пайĕ.

Теккоратсп пĕррĕмĕш пайĕнҁпйех.

I.

Кĕрлет, шавлаҫ йал пухăвĕ. Такам та пур кунта. Ларнă. Хăшĕ тăнă. Хăшĕ пушар сарайĕ ҫине хăпарса тирĕннĕ. Хăшĕ пусма ҫинҁе тăраҫҫĕ. Пурте хĕвелҫаврăнăш кăшлаҫҫĕ.

Тăрлав Ваҫки, Кăнихват Йаркейĕв, Пыркков-Пушкĕн, йалсовет пуҫлăхĕ Лыккăв малта, курăнмалли ҫĕрте сĕтел хушшинҁе ҫырса лараҫҫĕ.

ИҪМАССА ХĔВЕТĔРĔ. Иҫмасса сан калаҫмасан та йурамалла, и неҁҁăхă пăтратса ҫӳреме. Каланă сана пĕрре: ану ҫинҁе санăн ҁулсем ӳсеҫҫĕ, тесе, и неуштă есĕ манпа тавлашашшăн? Иҫмасса!..

ПАРАНКĂ КУҪМИ. Опишатех тăвасшăни ĕнтĕ есĕ мана?... Не мошет пыҫ тохо... Ес, Иҫмасса, итлеха, ухмахăн кăмака ҫинҁе аксан та пулаҫ, темеҫҫĕи-ха? и ҫавăнпа та ҁулсем ӳсни ҫинҁен калани тĕрĕс мар, и тата калăттăм та...

ИҪМАССА ХВЕТĔРĔ. И ан калаҫ та ĕнтĕ иҫмасса, никкак ĕненес ҫук епĕ ҫав сирĕн ушкăнпа пурăнсан, лайăхраххине и не мошет пыҫ тохо... Трактăр! Мĕн вăл трактăр?! Курнă-илтнĕ ҫын пури ăна? и не мошет пыҫ вăл потхоҫашҁи... Ҫӳретĕр хӳресĕр автан пек сиккелесе...

ПАРАНКĂ КУҪМИ. Неҁҁăхă санпа пупleме. Есĕ ху та хӳре пĕҫертнĕ кушаках и неҁҁăхă манпа тавлашма.

ИҪМАССА ХĔВЕТĔРĔ. Автан!

КН... г. Чебо-сар... Абнеем... № 25.

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Тӑмҫамка!

ИҪМАССА ХВЕТЕРЕ. Хӳресӗр автан!

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Есӗ ху хӳресӗр автан. Калаҫмастӑп епӗ санпа. Товоԓнӑ. Автан мар санпа кунта пуху ҫинԓе лӑркама. Шатун!

## II.

ТӐРЛАВ. Ей, Йаркейӗв, кам унта пире пуху тума кансӗрлет... Вҫаӗ вҫех пот сумленйе.

ЙАРКЕЙӖВ. Слушӑйу! Йест—пот сумленйе...

Паранкӑ Куҫми, Иҫмасса Хӗветӗрӗ, иксӗр те арестовӑн! Марш мунԓана...

ИҪМАССА ХВЕТЕРЕ. Не мошет пыӗ тохо... Кунта епӗр хӗлхемсӗрех ҫунатпӑр та, есӗ мунԓана...

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Хаԓ самӑй интерес пуҫланаӗ те, кайатпӑри вара мунԓана. Никкак не сокласҫӑн.

ЙАРКЕЙӖВ. Итлемеҫҫӗ, йулташ Тӑрлав...

ТӐРЛАВ. Мӗнле итлемеҫҫӗ?! Халех раскулаԓԓӗт!.. Йаркейӗв!—раскулаԓԓӗт... Ей, ҫынсем, исполниттӗлсем! Пурте Йаркейӗв патне. Халех имушԓӗствине кунта!

ИҪМАССА ХӖВЕТӖРӖ. Апла пулсан, кунта сывлама та манер ҫук. Вӑтӑр ҫул шухӑшланӑ шухӑш та сайах кайаӗ.

ПАРАНКӐ КУҪМИ. Апла пулсан, пыр шӑтӑкӗсене те питӗрсех лартмалла. Не мошет пыӗ тохо. Епӗр тата колхоса хирӗҫ те мар. Епӗр атӑ ертелӗ тӑвасшӑн.

ТӐРЛАВ. Хирӗҫ мар! Как хирӗҫ мар? Хирӗҫ мар пулсан, вҫоровно хирӗҫ пулатӑр. Раскулаԓԓӗт, неԓ-

ђăхă унта пăхма. Йаркейĕв!.. Илсе кай та, хăйсене мунђана. Пурлăхне кунта. Пилĕк минутра тунă пултăр. Çĕлеђђĕр унта атă ерттелĕнђе атă-пушмак...

ЙАРКЕЙĔВ. Слушăйу... Ну, шакăм марш!..

(Тухса кайаççĕ).

III.

СТАРИК. Ну, как еп сокласссĕн-ха? Ниçта та каймастăп, пўрнесенех илетĕп... Ну хăшĕ тан-ха? Акку пысăк пўрни темле пуклак, акку кунтан вăрăмрах, шĕвĕр пўрни—шĕвĕр, кађапўрни каллех кунтан кĕскерех. Неуштă вĕсене танлаштарма май пур?! Никкак не сокласссĕн.

ТĂРЛАВ. Кам унта несокласссĕн тата?

СТАРИК. Вăт епĕ кунта пўрнесем пирки.

ТĂРЛАВ. Пыркков-Пушкĕн! раскулађђĕт... Çийу минуту...

СТАРИК. Вăт пыр та калаç... Ахаљ каламан пуљ çав—нумай пĕл те сахалтарах калаç, тенине...

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Хăйне мунђана-н?

ТĂРЛАВ. Мунђана, и самăй сиввине...

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Ак сана мĕн калам, старик. Нумай пурăннă есĕ тĕнђере, сухална ўстернĕ пĕр аршăн, çапах тăрри санăн питĕрĕнсе çитмен-ха... А слушăй-кă пўрнесем пирки. Ђăмăрта-ха ман пек аллуна. Ну, ну ђăмăрта. Ђăмăртарăни? Вăт çапла. Халĕ пăх (Аллине ђăмăртаť те хăйне хăй айакпĕрђинђен çапаť). Куртăна?! Кўмп! çеç турĕ. Йăвансах кайаттăм. А есĕ тан мар, тетĕн. Тан вĕсем пурте, туљккă танлаштарма пĕлес пулаť вĕсене. Çавăн пекех хамăр та, уйрăмăн илсен ним те мар, а коллекти-

ва çыранха, никам та çентерес çук. Ну хаԓ анлантана?

СТАРИК. Анланмасар, хаԓ анлантам енте. Сан такçанах çапла каласа памалаԓԓе.

ПЫРККОВ-ПУШКЕН. Ну, хале ата мунԓана, унта тата лайахрах анланан. Ха-ха-ха!

СТАРИК. Пирвайлаха каçарма та йурат пуле енте.

ПЫРККОВ-ПУШКЕН. Ата, ата, унта каçареç. Ну, исполниттелсем, атар есер те виççен-таваттан.

(Тухса кайаççе. Хиреç Йаркейевпа исполниттелсем çетек-çатак тумтир, кашак-çапала çеклесе кереççе. Унтан Пыркков-Пушкен та керет).

IV.

ЙАРКЕЙЕВ. Иçмассапа Паранкана раскулаԓԓет турамар. Йапалисем ака кунта.

ТАРЛАВ. Йурат. Йапалисене кунталла, малалла килсе парахар. Çав канан весен пурлахесем? Пытарна пуԓ весем. Лайахрах шырамаллаԓԓе..

ЙАРКЕЙЕВ. Никак нет... Урах нимте хавармарамар. Кушаккайак шатакесене те пахрамар. Çук.

ТАРЛАВ. Ну йурат.

V.

ТАРЛАВ. Ну, халахсем, вахат иртре. Шухашламаллине шухашласа петермелле енте. Ну кам колхоса кересшен... Никам та кересшен çуки?

ХАЛАТ (мала тухса). Мана самах парар-ха? Мана калама йуратпи?

ԓУХАН. Лишшоннайа калама йурамаст. Ан парар ана самах. Емер енсене кашлана та, хале те тата... Çите!

ХӐЛАТ. Кам, еп лишшоннăйи?! Ман аттесем, асаттесем лишшоннăй пулман та, еп пулапи? Лайăх мар, лайăх мар çапла суйма...

ТĂРЛАВ. Кам унта тата сăмах каласшăн? Сăмахсем калама вăхăт иртнĕ ĕнтĕ. Ес хирĕçи?

ХĂЛАТ. Каккуй таккуй хирĕç? Уппаçи турă. Епĕ икĕ аллăмпа йышăнатăп колхоса и турăран килнĕ çăлăнăç пекех хапăлласа илетĕп ăна...

ТĂРЛАВ. Вăт аслă çын! Тӳрех калас пулат, колхоса суйламалла ăна.

ҴУХАН. Вăл усламçă, кулак, Ăна лишшит тунă...

ТĂРЛАВ. Кам лишшит тунă? Ну, лишшит тунă пулсан та, çавăн пек лайăх сăмахсем каланăшăн сасă хамах паратăп.

ХĂЛАТ. Еп соклаççăн, соклаççăн... Ну, тăвансем, (халăха), савăнăçлă вăхăтсем çитрĕç. Пирĕн пурин те колхоса кĕрсе сотсиалисăм тумалла. Анҫах еп каласшăн... колхос мар пирĕн тăвас...

ТĂРЛАВ. Што?!

ЙАРКЕЙЕВ. Што?!

ЛЫККĂВ (çинҫе саспа). Што?!

ХĂЛАТ. Колхос мар пирĕн тăвас... комун тăвас пулат, и пултăр пирĕн сотсиалисăм мар...

ТĂРЛАВ, ЙАРКЕЙЕВ, ЛЫККĂВ. Што?!

ХĂЛАТ. И пултăр пирĕн сотсиалисăм мар... тӳрех комунисмă...

ТАРЛАВ, ЙАРКЕЙЕВ, ЛЫККĂВ. Ха-ха-ха! Тот маттурă. Пултарат ку çын...

ХĂЛАТ. Ну, тăвансем, кам хирĕç? Конешнă хирĕççи тупăнас çук. И хам йенҫен калатăп тата: арăмăн

хушпу пурђђё и çав хушпува комун йађёпе паратăп. Акă илёр...

ТĂРЛАВ. И комун йађёпе тав сире. Ну, кам комуна хирёç? Хирёççи çук? Апла пулсан, комун тунă тесе шутлăпăр.

ЂУХĂН. Еп сокдаççăн мар. Çав Хăлатпа пёрле нийепле те комуна кёрес çук.

ТĂРЛАВ. Кам унта? Йаркейёв! вçаť пот сумленийе...

ЙАРКЕЙЁВ. Арестăвăн! Мунђана!

ЂУХĂН. Анђăк çури!

ЙАРКЕЙЁВ. Айта, айта...

(Тухса кайаççё, хирёç исполниттёлсем йапаласем çёклесе кёреççё).

ТĂРЛАВ. Комун тунă пирки, йулташсем, епё сире халё салам калатăп. Салам сире, комунарсем! Љупуйу минуту епё сире хатёр пулăшма. Но тољккă епё кăљт шăхăрсан коттăвă пулăр...

ПЫРККОВ-ПУШКЁН. Йаланах хатёр... Ура! Ура!

ТĂРЛАВ. Саламлă сăмахсем хыççăн йаланах ура! кăшкăрмалла. Ну, аťăр-ха, манпа... Ура! (*хăшёпёри кăшкăраççё*). Хытăрах кăшкăрмалла. Ăçта-ха çав Йаркейёв? Вăл кăшкăраканђђё. Йаркейёв!..

ЙАРКЕЙЁВ (*ђупса кёрсе*). Йа!

ТРЛАВ. Кăшкăрха комун йађёпе ура!

ЙАРКЕЙЁВ. Ура! (*Пурте кулаççё*).

ТĂРЛАВ. Вот молотсом...

ЙАРКЕЙЁВ. Рат старатсă...

ТĂРЛАВ. Апла пулсан, комун правленийё суйлама пуçлăпăр. Кун пирки кăнтитатсем те тен пури?..

ХĂЛАТ. Какшё? Такçанах шутласа хунă. Есё ху, Йаркейёв, Çăрттан Çитăрё, ну, хёрарăмран кам акти-

вис, ну, Ҫветтуй вота шывӗ—ҫавна суйлас. Ну, пиллӗкмӗшне хӑвӑр суйлӑр. Епӗ хам правленийе кӗресшӗн мар.

ТӐРЛАВ. Кӑнтитатсем лайӑх. Хам епӗ—йертсе пыраканни, Йаркейӗв—управђайушђи, Ҫӑрттан Ҫитӑрӗ—пролеттари, хӗрарӑмӗ те—пролеттарккӑ... Мӗн кирлӗ тата?! Пит лайӑх. Пиллӗкӗмӗшне епӗ ҫак йалсовет пуҫлӑхне Лыккӑв йулташа суйлаттарасшӑн...

ЛЫККӐВ. Ҫук, ҫук, ан суйлӑр, тархасшӑн. Епӗ халӗ йалсоветђӗпе те аптӑранӑ.

ТӐРЛАВ. Ниђђахо. Унта пулӑшӑпӑр.

ЛЫККӐВ (*аллине ҫеҫ сулаť*). Унта куҫ шашарит тунӑђђӗ, сивӗнсе кайманши?! Аťӑрха перерыв тӑвар...

ТӐРЛАВ. Хаљ перерыв тума йурамасť... Отменит ту куҫне. Кайарах. (*Лыккӑв тухса кайаť*). Ну, кам хирӗҫ ку кӑнтитатсене? Хирӗҫҫи ҫук. Ҫапла, комун правленийе суйланатпӑр: епӗ, Йаркейӗв, Ҫӑрттан Ҫитӑрӗ, хӗрарӑм Сӑпани, тата Лыккӑв...

ПЫРККОВ-ПУШКӖН. Алӑ ҫупӑр, хӑвӑртрах алӑ ҫупӑр (*хӑшӗ пӗри алӑ ҫупаҫҫӗ*).

ТӐРЛАВ. Шанса суйланӑшӑн тав. Мӗнле есӗр пирӗн ҫинђен лайӑх шутласа, сумасуса суйланӑ, ҫавӑн пекех епӗр те сире ырӑ тӑвӑпӑр. Халӗ «Ҫӑпата» йурри йурлама ыйтатӑп.

(*Пырккков-Пушкӗн пуҫласа йараť, ун хыҫҫӑн пурте «Ҫӑпата» йуррине йурлаҫҫӗ*)...

ТӐРЛАВ. Тӑвансем! ђӑтаймастӑп... ђунӑм сӗрҫирӗм пайа ҫӗмрӗлсе кайрӗ. Мӗнле илем, мӗнле кӗвӗ! епӗр пӗр ҫын пек ушкӑнланса йурласа комунисама куҫатпӑр. Еп сисетӗп ӑна, еп туйатӑп. Тӑвансем!

КН ... г. Чебоксары ... Асоясм ... 1935

Есĕр пĕлетри еп кам иккенне: йа вĕт йа, йа вышшĕ ђентра, и сам йа вышшĕ сута йа РСФСР!!! Тăвапсем... (халран кайса ӳкет, унтан тăрат те каллех сăмахлама пуçлат)... Йа вĕт йа, йа вышшĕ ђентра...

ЙАРКЕЙЕВ. Йĕрĕр, тăвансем, йĕрĕр. Таса куççулĕ вăл ђĕрене тасатат. Тăвансем, çĕнĕ пурнăçа куçрăмăр (й ĕ р е т). Йурлăр тепĕр хут «Çăпата» йуррине. (Х у л л е н ç е ç й у р л а ç ç ĕ «Ç ă п а т а» к ĕ в в и н е).

## VI.

Шăппăн çеç пырса тăрат Хăлат Тăрлав çумне. Ун хыçĕнђен Ђĕрĕ Çветтуй пырат. Пурте пăхса тăраççĕ.

ХĂЛАТ. Тăр, тăр аслă тӳрĕ. Еп сире шђеттовот та хатĕрлерĕм. Шут йенђен халĕ хăрамалли ним те çук. Пит те аккуратнăй шђеттовот.

ТĂРЛАВ. Ах, ан кансĕрле-ха. Пуç çаврăнса кайрĕ. Пар пăртак канма. Çĕр прођђăнĕпех вĕт комуна, çĕр прођђĕнĕпех! Не тарăм епĕ вышшĕ ђентра. Еп, еп, Тăрлав Ваçки, тĕнђе питне улăштаракапни! Вот кам епĕ.

ХĂЛАТ. Тĕрĕс, тĕрĕс. А шђеттовођĕ кĕтет вĕт. Комунра шђеттовотсăр пулмалла мар.

ТĂРЛАВ. Пуç çаврăннă сурăх пек ĕнтĕ епĕ халĕ. Ним те ăнланаймастăп. Ну, калаха, ђипертерех.

ТĂРЛАВ. Ăçта, мĕнле шђеттовот?

ТĂРЛАВ. Ăçта, мĕнле шђетовот?

ХĂЛАТ. Акă, Ђĕрĕ Çветтуй шђеттовот пуласшăн.

ТĂРЛАВ. Пупи?! Кирлĕ мар, кирлĕ мар. Комунра нийепле пуп та пулмаст.

ХĂЛАТ. Çакăн?! Пуп мар вăл, пуп мар. Ăна хĕрарăмпа та танлаштарма йурат. Пупăнни, унăн вăрăм

çӳç те, вăрăм тумтир çеç. Йăваш пуп вăл, йăваш. Çӳçне те халех кастарăт вăл. Çаплан, Ђĕрĕ Çветтуй?

ЂЕРĔ ÇВЕТТУЙ. Такçанах епĕ соклаç. Çӳçе те кастаратăп, вăрăм тумтире те хывтаратăп. Ку çеç мар-ха, йаЂейккă песпошнĕк те тăвăп-ха.

ТĂРЛАВ. Ха-ха-ха! Вăт тăк пуп. Ку шăпах пирĕн йышши. Йаркейĕв, хаЂă...

ЙАРКЕЙĔВ. Акă. (Пысăк хаЂă кăларса парать).

ТĂРЛАВ. Ха-ха-ха! Касатăп, халăхсем. Касас-и?

ХАЛĂХ. Кас, кас! Çӳçĕпе пĕрле хăлхине те, сăмсине те.

ТĂРЛАВ. Касатăп еппин. Во имĕ отса и сынă... (касать). Ну пăхăр халĕ. Лайăхи? (кăтартать).

ХАЛĂХ. Ха-ха-ха!

ХĂЛАТ. Ђĕрĕ çветтуй, хăвăртрах çаврăнкала, хăвăртрах, савăнтăр халăх. Ха-ха-ха!

ТĂРЛАВ. Ха-ха-ха! Йаркейĕв, халĕ хывса ил Ђаппанне те тумлантар ху пекех.

ЙАРКЕЙĔВ. Слушăйу. (Тумлантарать, пурте ахăлтатса кулаççĕ).

ТĂРЛАВ. Ес, Пыркков-Пушкĕн, çĕнĕ шЂетовота шЂут илсе килсе пар.

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Акă хаЂ çеç илсе килнĕскер. Ме, тыт хăвăн хатĕрне.

ТĂРЛАВ. Халăхсем, йуратăн, шЂетовот?

ХАЛĂХ. Йурать, йурать, пит те лайăх шЂетовот. Ха-ха-ха! ((кулаççĕ).

VII.

ТĂРЛАВ. Ну, халĕ Ђансене ишме! Турăсене çунтарма! Тăрса тухăр икшерĕн, Йаркейĕв!

ЙАРКЕЙЁВ. Слушăйу. Становиç! Равђайçă! Коттовă...

ТĂРЛАВ. Йуналут мана. Епĕ çар пуçлăхĕ. Пурте ман хыççăн, малалла, малалла! Ес, Йаркейёв, хыçалтан... Çмирнă! Шакăм марш! (Пурте тухаççĕ, хыçалтисем тăраççĕ, Йаркейёв иккĕшне тытаť).

ЙАРКЕЙЁВ. Арестовăн!

VIII.

1-мĕш ХЁРАРĂМ. Хурах, Вĕлереççĕ! Пусаççĕ!

ЙАРКЕЙЁВ. Арестовăн.

ХРЕСЂЕН. Укахви, мĕн çухăран, арестованнăй ђух ăна çухăрмаççĕ, йĕркине пĕлместĕн.

ЙАРКЕЙЁВ. Рукки верх. Çапла, çапла. Есĕ Укахви, çапла çĕкле аллусене. Халĕ колхос мар, комун ĕнтĕ. Еп сире. Сивĕ мунђана шакăм марш! Апла мар, апла мар. Кунталла. Есĕ, Укахви, сулахай аллупа мар... ťфу, шивой шуйттан, аллупа мар, урупа утма пуçла... Ну, çĕнĕрен... Сивĕ мунђана марш! Оставиť... (вĕрентет, вĕрентсен, вĕрентсен ђупма вĕрентет). Сивĕ мунђана пекоом марш! Не так, не так... Стой... Саккури... Сивĕ мунђана шакăмпа пекоом марш!

(Ђупса тухса кайаççĕ).

IX.

Хăлатпа Ђĕрĕ Çветтуй кĕреççĕ.

ХĂЛАТ. Ха-ха-ха! Вĕрентрĕ вĕт, шеремет, вĕрентрĕ салтакла. Ахаљ каламан иккен упана та ташлама вĕрентме пулаť, тесе. Ха-ха-ха! Ес итле-ха, Ђĕрĕ Çветтуй, есĕ итле... Епĕр шутланинђен те лайăхрах пулса пыраť. Ха-ха-ха!.. Хаљ ĕнтĕ епĕр снаť не сна-

йём çелский пеђђат, тавай пире исполкомран... Хаха-ха! С корпём толой!

ЂЕРЕ ÇВЕТТУЙ. Сат-та-на управ-ленийё! У мерсавтсăсем.

ХĂЛАТ. Такамсем килеççĕ. Айта...

(Шăппăн ђупса тухаççĕ).)

X.

Тин çеç ђиркӳ йенне кайнă темонстратси хыççăн хĕрарăм ушкăнĕ ђупса иртет. Малта Çветтуй вота шывĕ.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВЕ. Хĕрарăмсем, карђăксем, турăшсене çунтарма тытăннă унта, ђансене касса антараççĕ. Памастпăр антихриссене турă ђиркӳне пăсма...

ХЕРАРАМСЕМ. Памастпăр, памастпăр... Вута пăрахас хăйсене. Тĕп антихрисне тытас.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВЕ. Ђупатпăр, никесем... (Пурте ђупса иртеççĕ. Хыçалтан карђăк).

КАРЂĂК. Çилсĕр-çунатсăр, хăй тĕллĕн сăмахпа кукăђ авăртакан арман çумне пырса тăнă, тет. Хăйĕн пиђĕсем хăнтăла пек хĕпхĕрлĕ, тет. Шыçмак куђĕпеле йăкăлт-йăкăлт сиккелет, тет. Çăкăртан та аслă, тет çынни. Лапра Упакассинђен тухнă, тет йăтăнса. Каçар пирĕн çылăхсене Пихампар. Пĕсмĕлле, пĕсмĕлле. Иртсе кай пиртен усал есрелĕ.

XI.

Хут купăспа çĕмĕрттерсе кĕрет Çăрттан Çитăрĕ.

ÇĂРТТАН ÇИТАРЕ.

Пиђђе лаши кăвак лаша,
Кăвак сутђен ђупсан та,
Пиђђе мана йатлас çук...

Ей, куђай, нашша сторона! Çăрттан Çитăрĕ хăй ĕçне тăватех... Ахаљ ĕçтермеççĕ ăна Хăлатсем...

Çăварни çуни çут çуна,
Çутти йултăр çул çине...
Манăн пиђђен ырă йат,
Йађĕ йултăр йал çине...

Ей, куђай, наша сторона... (Пăхкалаĭ, никамта çук).

Самăй вăхăт... (Шăрпăк кăлараĭ те пушар сарайăн пĕр кĕтессине вут ђĕртет. Сиксе тăраĭ те ђупса тухаĭ. Çухалђĕ).

XII.

Йалсовет пуçлăхĕ Лыккăв кĕрет.

ЛЫККĂВ. Куç шаршарит тунă. Шăп çиме вăхăт çитнĕ... Паĭĭушки, маттушки! (пăхкалаĭ) Хурах! Пушар сарайне вут тивнĕ. Хурах! (Ђупса тухса кăшкăра-кăшкăра тараĭ).

## 3-мĕш пайĕ.

Теккоратси. Пысăк пӳлĕм. Ку пӳлĕме 10—15 алăк тухаççĕ, кашнă алăк çине йатпа хушамат çырса хунă.

1.

Карђăксемпе стариксем тата Йаркейĕв йурлаççĕ[1]).

Карта вĕçне кантăр акрăм,
Шăши пырса йĕрлерĕ.
Шăши йĕрне йĕрле-йĕрле
Йĕлтĕр пуçне пĕтертĕм.
Ех, молотайа!
Йĕлтĕр пуçне йуса-йуса
Катăк пуртта пĕтертĕм.

Катӑк пуртта йуса-йуса
Пӗр пӑт хурҫӑ пӗтертӗм.
Ех, молотайа!
Пӗр хуран апат ҫийес тесе,
Тутам-ҫӑвара пӗҫертрӗм.
Ех, молотайа!
Тута-ҫӑвара йусас тесе,
Пӗр пӑт сарҫу пӗтертӗм.
Ех, молотайа!
Пӗр пӑт ҫӑва тӑвас тесе,
Килҫуртӑма пӗтертӗм.
Ех, молотайа!
Ҫуртӑм йӗре тӑвас тесе,
Хура вӑрмана пӗтертӗм.
Ех, молотайа!
Хура вӑрмана касас тесе,
Катӑк пуртта пӗтертӗм.
Ех, молотайа!

1-мӗш СТАРИК (мала тухса).
Йӑкӑш-йакӑш сикмешкӗн
Ура йака кирлӗ ҫав,
Хирӗҫ тӑрса ташлама
Ађи сарӑ кирлӗ ҫав.
Еп те улпут ывӑлђ мар,
Ес те улпут хӗрӗ мар,
Ташласан та ним те мар,
Ђуп тусан та ҫылӑх мар...

Ну, мӗншӗн тата, Пракуҫ инке, тухмарӑп-ха... Каллех ҫилентеретӗп ӗнтӗ Кӑнихвата.

КАРЂӐК. Ҫӑмӑл мар ӗнтӗ мана авкаланма. Ху та пӗлетӗн, утмӑл пиллӗке пуснӑ.

ЙАРКЕЙЕВ. Ну, ес калаҫса тăрха унта. Ей, стариксем, ҫĕнĕрен ташă кĕввине. Есĕ, Пракуҫ, Ађакка старике хирĕҫ тухса тăр. Штопă мана лайăх тунă пултăр. Ну, пуҫлăр, пуҫлăр.

1-мĕш СТАРИК.

Йăкăш-йăкăш сикмешкĕн
Ура йака кирлĕ ҫав,
Хирĕҫ тăрса ташлама
Ађи сарă кирлĕ ҫав.
Еп те улпут ывăђ мар,
Ес те улпут хĕрĕ мар,
Ташласан та нимĕн те мар,
Ђуп тусан та ҫылăх мар...

(Ташласа пĕтерсенех старикпе карђăк пĕр-пĕринпе ђуп тăваҫҫĕ).

ЙАРКЕЙЕВ. Вăт хађ лайăх. Саккурпĭ туса йарăр. Ларăр. Капăр пăртак.

(Пуҫсене ђиксе лараҫҫĕ, пĕр-пĕрипе темле ђĕлхепе калаҫаҫҫĕ).

КАРЂАК. Пасар пуҫне пас тыттăр,
Мулĕ пуҫне мур хиртĕр.

СТАРИК. Вакурай! Вакурай! Калтата виђка, пин пин питенушка, питенушка, питенушка, толой!

КАРЂАК. Пĕр калакăм, ик калакăм, шăкăршакăр шак, ытар-ытар ытара ытармалла мар сана.

СТАРИК. Вакурай! Вакурай! Ҫĕтĕк ҫатăк тимĕрҫĕсем сиксе тимĕр шаккаҫҫĕ. Вакурай!

КАРЂАКСЕМ (пурте). Вакурай!

ЙАРКЕЙЕВ. На кимпаҫтĕкку становиҫ!..

(Пурте тăрса тухаҫҫĕ, Йаркейĕв вĕрентет. Унтан

Йаркейӗв карҕӑксемпе стариксене Май уйавне мӗнле ирттермелли ҫинҕен ӑнлантарса парать).

ЙАРКЕЙӖВ. Ну, стариксем, карҕӑксем, капла лайӑхах туса пырсан, Май уйавне епӗр ниҫта ҫук лайӑх иртерӗпӗр. Хӑвӑр та тӑрӑшӑр. Как нипут туса иртерес пулать. Ҫавӑнпа та сире ҫак ӗҫе ҫеҫ панӑ та. Ну ҫулсем те пур ӗнтӗ сирӗн. Ҫавна та пӑхнӑ. Ахаљ тытса усраси-ха сире?

СТАРИК. Урасем ҫинҕе тӑраймастпӑр ӗнтӗ. Йар пӗреххут килсене.

ЙАРКЕЙӖВ. Ҕасах ывӑннӑ та. Ну, кайӑр еппин пӗреххут. Ыран каллех ҫакӑнта.

(Карҕӑксемпе стариксем нысӑк пӳлӗме тухакан алӑксене кӗре-кӗре кайаҫҫӗ).

II.

(Хӑвӑрттӑн Тӑрлавпа Пырккоь-Пушкӗн кӗреҫҫӗ).

ТӐРЛАВ. Йаркейӗв! Есӗ кунта-и? Халех хатӗрлен. Хатӗр-и есӗ?

ЙАРКЕЙӖВ. Йаланах хатӗр.

ТӐРЛАВ. Ҫуракине хатӗрленме прикас килнӗ. Вӑл ӗҫе халех тытӑнмалла тенӗ.

ЙАРКЕЙӖВ. Ҫийу минуту хатӗр!

ТӐРЛАВ. Апла пулсан есӗ акӑ мӗн ту. Епӗ ӗҫе йӗркепе туса пырасшӑн. Так как уйсенҕе йур пӗтӗмпех кайса пӗтмен, то малтан, ҫав йурсене хырса тасатас пулать. Штопӑ ан пултӑр вӑл йур. Унтан вӑрлӑхне. Есӗ, Йаркейӗв, вунсакӑр ҫултан пусласа аллӑ икӗ ҫул тултарнӑ арҫынсене пурне те кӗреҫе пар та илсе кай уйа. Ӑнлантӑни?

ЙАРКЕЙӖВ. Так тошнӑ...

ТӐРЛАВ. Халӗ сана та ӗҫ парам, Пырккоь-Пушкӗн.

КН ЖАЛАТА Чебоксары Чӑваш АССР

Есё хёрарӑм пуҫлӑхӗ пул. Хӗрарӑмсене пух та вӑрлӑх тасаттар. Ну, покка алӑсемпех, ыран-пайанах сортировккӑсем килмелле. Ҫапах ёҫ малалла. Ну, йулташсем, иксӗр те марш. Леҫсе хӑварӑр та хӑвӑр кайалла. Ёҫ пурҍӗ, и саҫҫетани туса иртермелле.

(Тухса кайаҫҫӗ. Тулта пӗр вӑхӑт шавласа илеҫҫӗ те ҍарӑнаҫҫӗ. Йаркейёв, Пыркков-Пушкӗн кӑшкӑрнисем илтӗнеҫҫӗ).

III.

(Тӑрлав пӗҍҍенех уткаласа ҫӳрет. Кӗрет йалкор Ҫивӗҍӗ перо).

ТӐРЛАВ. А, йалкор!.. Кил-ха, кил-ха кунталла. Еп сана пӑхам. Кам сана пирӗн ҫинҍен хаҫата ҫырма расрешени панӑ? А?

ЙАЛКОР. Сана халӑхран кулма кам расрешени панӑ?

ТӐРЛАВ. У, мерсавтсӑ! Йаркейёв! Ҫийу минуту арестоват потлетса.

ЙАЛКОР. Рукки коротки. Кунусем кӗскелсе килеҫҫӗ. ёнтӗ, Тӑрлав Ваҫки... Ыран-пайан акӑ хуларан килеҫҫӗ.

ТӐРЛАВ. Молҍҍи! Йаркейёв! Йаркейёв! контрреволҍутсионере поймал.

ЙАЛКОР. Лӑплан, лӑплан, ахалех ҫӗтӗлетӗн. Вӑхӑҍӗ ҫитмен-ха ҫурӑлма...

ТӐРЛАВ (й а л к о р а т а п ӑ н с а). А, есӗ павраса тӑратна-ха... Вил, пӗтме маннӑскер...

(Йалкор ӗҫрӗнсе ҍупат, Тӑрлав йулат).

IV.

К ӗ р е ҫ ҫ ӗ Й а р к е й ё в п а П ы р к к о в-П у ш к ӗ н.

ПЫРККОВ-ПУШКӖН. Мӗн, тӑванӑм, пуҫна уссах йанӑ. Кам та пулсан кансӗрлемерӗ-и?

ТĂРЛАВ. Ҫавсемех ĕнтĕ пире пĕтереҫҫĕ.

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Камсем?

ТĂРЛАВ. Хут варлакансем. Хађ тĕл пултăм та ђут ҫапса пăрахаттăм. Хирĕҫ калаҫаӗ. А, пĕлети епĕ кам иккенне?! Йа вĕт йа, йа вышшĕ сута, йа вышшĕ ђентра, йа... (кăкрине шаккаӗ). А вăл мапа тем те пĕр сăмахсемпе.

ЙАРКЕЙĔВ. Есĕр мана кăна кăшкăрмаллађђĕ. Епĕ нађђас ун пеккисене.

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Лишшат тăвас пулаӗ ун пек шăрђăксене сасăран, вара ташласа пăхђĕр вĕсем... Тата ҫырса йарас ретаксине лишшат тунă, тесе...

ТĂРЛАВ. Пыркков-Пушкĕн, ылтăн есĕ, кил ђуп тăвам. Мĕнле ман пуҫа ун пек хаклă шухăш пырса кĕреймен. Кил-ха, кил ђуптăвам.

ЙАРКЕЙĔВ. Халех протоколне те ҫырас. Аӗа, Пыркков-Пушкĕн, ҫыр. (Ҫ ы р а ҫ ҫ ĕ).

ТĂРЛАВ. Ну еп тоболĕн, пит те тоболĕн. Текех ҫăварсене караймĕҫ. Такҫанах лишшаӗ тумалла пулнă. Раскулађђĕт тума май ҫук-и тата?

ЙАРКЕЙĔВ. Ним те ҫук. Ҫиме ҫăкăрĕ те ҫук.

ТĂРЛАВ. Апла пулсан, лишшит туппе те ҫитĕ. Ну, еп тоболĕн, так тоболĕн. Пĕлсе тăрăр. Ђупуйу мунутту епĕ сире хатĕр пулăшма. Ђентăра мĕне суйласа лартсан, ĕнтĕ сире тӳрех кăмиссара. Сана, Йаркейĕв, мĕнле комиссара лартас?

ЙАРКЕЙĔВ. Хе-хе-хе! Ну, епĕ ҫар комиссарĕпе те килĕшме пултаратăп.

ТĂРЛАВ. Есĕ, Пыркков-Пушкĕн, мĕнле вырăна?

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. Епĕ нийепле те Совнарком пуҫлăхĕнђен айала ларасшăн мар. Совнарком мана.

ТĂРЛАВ. Ха-ха-ха! Епĕ хам ҪИК, есĕ Совнарком, есĕ ҫар комиссарĕ. Ха-ха-ха! Апла пулсан, епĕр тĕрĕксене вăрҫă опйавит тума та пултаратпăр. Ха-ха-ха! Акă ăҫта вăл пирĕн вăй. Тăрлав, Пыркков-Пушкĕн, Йаркейĕв... Сывă пултăр ҫак виҫĕ паттăр. Ҫак виҫĕ паттăр пулмасан, пирĕн районта пирĕн ҫак кăтартуллă комун-кикант та пулас ҫук. Ну, Йаркейĕв, Пыркков-Пушкĕн, как нипуй те пирĕн Хĕрлĕ йалав ортĕнне илме тăрăшас пулай. Сана ортĕн, мана ортĕн, сана... И пурте товолĕн... Ех, Йаркейĕв, ҫунăм лĕпĕш пек ҫĕкленсе вĕҫсе савăнай...

ЙАРКЕЙĔВ. А манăн ҫĕрем савăннипе сурăх хўри пек ҫĕтрет...

ПЫРККОВ-ПУШКĔН. А манăн ҫĕрем савăннипе... (Ҫăварне карсах йулай. Сасартăк ҫан йанăрама пуҫлай. Кăшкăрашу, шавлашу пуҫланай тулта).

V.

ПАРАНКĂ КУҪМИ. Мĕнле вăл йĕрке?! Халăха кăларса йарай уйа йур тасатма... Вăл халăхран мăшкăлани пулай.

ХАЛĂХ. Ҫитĕ, ҫитĕ ĕнтĕ пиртен кулма.

ИҪМАССА ХĔВЕТĔРĔ. Иҫмасса, картасене, картăшсене тасатма хушнă пулсан.

ХАЛĂХ. Йышăнмастпăр епĕр кун пек йĕркесене,

ИҪМАССА ХĔВЕТĔРĔ. Иҫмасса тата хĕрарăмсене ĕҫ панă пулсан. Вĕсене тата вăрлăха пĕрҫĕн алăпа сортовай тума хушнă.

ХАЛĂХ. Мăшкăл, мăшкăл...

ПАРАНКĂ КУҪМИ. Кулай вăл пиртен. Совет влаҫĕ ун пек мăшкăлама хушмасй. Пăхăнар мар, тăвансем, ун пек ухмах йĕркесене.

ХАЛĂХ. Валеçсе пар ĕнтĕ пире кайалла хамăр пурлăха.

ПАРАНКĂ КУÇМИ. Тавай пире урăх йĕрке, килĕшместпĕр каплипе... Аттăр, тăвансем, совет йĕрки кун пек пулмалла мар. Иçмасса Хĕветĕрне суйласа йарар хулана. Пĕлсе килтĕр унтан вăл йĕркене. Май килсен, проккурорне те лартсах килтĕр. Соклаç-и, тăвансем?

ХАЛĂХ. Соклаç, соклаç...

ПАРАНКĂ КУÇМИ. Пирĕн комун комун мар, мăшкăл çеç. Ман аҕа пур, шкулта вĕренет, пионер вăл. Çав калать: ун пек йĕрке пулмалла мар, тет вăл. Теме çавсем те... те шкуллă йалта çеç ĕçлемелле вĕсен? Пирĕн йала килсе те курăнмаççĕ.

ТĂРЛАВ (сиксе тăрса). Пăлхав! Есĕр мансăр пуçне ĕçе пăрахса килнĕ?! Как çмейĕтте? Йаркейĕв!

ЙАРКЕЙĔВ. Çмирнă!

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ (мала тухса). Çмирнă! Ак сана çмирнă! Арăмна кăшкăр касхине. Хĕрарăмсем, тухăр-ха малалла. Тăрлав Ваçки, уç халех пире ҕиркӳве. Тавай пире ҕиркӳ!..

ХĔРАРĂМСЕМ. Ҕиркӳ, ҕиркӳ пар пире...

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. Çынсем мункуна хатĕрлеççĕ, çăмартасем хĕретеççĕ, пирĕн пур... Çитĕ, çитĕ, ĕнтĕ антихрис йĕркипе пурăнма.

ХĔРАРĂМСЕМ. Кирлĕ мар пире...

ÇĂРТТАН ÇИТĂРĔ. Мĕн пăхса тăмалли пур, илĕр, тăвансем, хăмăтăрсене, йĕвенĕрсене... Илĕр те кашнийĕ килелле. Лăпăртатса çӳреме кунта неҕҕĕхă.

ҔУХĂН. Иçмасса Хĕветĕрĕ хулана кайса килиҕҕен тăрас мар-и, тăвансем? Унтан мĕнле устав килĕ...

ÇĂРТТАН ÇИТАРĔ. Куртăмăр ĕнтĕ комун пурнăç-не. Çитĕ. Пурте килсене.

ХАЛĂХ. Киле, киле...

(Алăксене кĕре-кĕре йапаласене çĕклесе тухса ђупаççĕ килĕсене).

VI.

Тăрлав, Пыркков-Пушкĕн, Йаркейĕв тăнă та хытса кайнă. Кĕреççĕ Хăлатпа Ђĕрĕ çветтуй.

ХĂЛАТ (хаçат парса). Вула та ăнлан, тăмçамка...

ЂЕРĔ ÇВЕТТУЙ (штђотне çĕклесе çапса). Илĕр ман-ран саттана штђутне. Пĕтрĕ ĕнтĕ маншăн та тамăк пурнăçĕ. У, саттана управленийĕ!

VII.

1-мĕш ХЕРАРĂМ. Петĕр, Йакку, Уçăп, Çеркей, аŭăр хăвăртрах... Ăçта мура çухалса йулнă тата. Петĕр, Йакку, Уçăп, Çеркей. Ей, Çеркей! (т у х с а к а й а ŭ).

1-мĕш АЂА. Анне! (ђ у п с а и р т е т).

2-мĕш АЂА. Анне! (и р т е т).

3-мĕш АЂА. Анне! (и р т е т).

4-мĕш АЂА. Анне! (и р т е т).

(П ĕ р у ш к ă н х а л ă х ђ у п с а и р т е т).

VIII.

Карђăксемпе стариксем.

1-мĕш СТАРИК. Становиç! Равђайçă!.. Килелле, маршăм шакăм! Йурă!

> Çук çын çукшăн куђанаŭ те,
> Пур çын пуршăн куђанаŭ;
> Пирĕн ни пур мар, ни çук мар,
> Пирĕн мĕншĕн куђанас... (Т ă р л а в с е н е к и р ĕ ç т ă р с а).

Ах, пиђђесем, мён тăвас!
Пирĕн инке пуласси те
Купăста касма кайсассăн
Хупах хуçса килнĕ тет.
Ах, пиђђесем, мён тăвас!
Пирĕн инке пуласси те
Сухан ђĕлме кайсассăн,
Хăйах ђĕлсе килнĕ, тет.
Ах, пиђђесем, мён тăвас!
Пирĕн инке пуласси те
Улма кăларма кайсассăн,
Ђул пуçтарса килнĕ, тет...

1-мĕш СТАРИК. Çмирнă! Ну, сывă пулăр... Йаркейĕв, тав сана вĕрентнĕшĕн. Киле те стройпах кайатпăр. Маршăм шакăм! (Т у х с а к а й а ç ç ĕ).

ЙАРКЕЙЕВ. Ха, пăх-ха, стройпах кайаççĕ... Епĕ вĕт вĕсене... Епĕ—Йаркейĕв Кăнихват.

ТАРЛАВ. Йаркейĕв! Хăвала хыçалтан. Пурне те кайалла çавăрса кил. Неуштă туймастăр, тĕнђе кулли пулнине. Ђупăр, хăвалăр кайалла. Пĕтрĕ, пĕтрĕ пирĕн комун-кикант. Йаркейĕв, Пыркков-Пушкĕн, хăвалăр хыçалтан... Тавăрăр, тархасшăн...

ЙАРКЕЙЕВ. Пăх-ха, пăх-ха мĕнле лайăх утаççĕ. Рас, тва, три, ђеттырĕ! Левăй! Левăй!

ПЫРККОВ-ПУШКЕН (х а ç а т н е ç ĕ р т е н и л с е). «Çитĕнўсем пирки пуç çавăрăнни»... (В у л а ť). «Ирĕксĕрлетсе колхоса никама та кĕртме йурамасť»... Апла пулсан, епĕ киле... Сывă пул, Тăрлав. (Т у х с а к а й а ť).

ЙАРКЕЙЕВ (х а ç а т н е и л с е). «Ирĕксĕрлетме никама та йурамасť». Апла пулсан, епĕ те килелле... Сывă пул, Тăрлав.

ТĂРЛАВ. Пĕтрĕм пуç, пĕтрĕм. Пуçăм çаврăнса çеç мар, анкăминкĕленсех кайрĕ. Йаркейĕв, Пыркков-Пушкĕн, ђимĕр-ха пăртак. Ах, пуçăм, пуçăм çурăлаť...

IX.

КАРЂАК. (Т ă р л а в а). Вĕреçĕлен! Антихрис! (Т у х а ť).

ТĂРЛАВ. Ах, пуçăм, пуçăм çурăлаť.

X.

Хăлат, Ђĕрĕ Çветтуй, Çăрттан, Çветтуй вота шывĕ кĕреççĕ. Ђĕрĕ Çветтуй вăрăм тумтирпе. Тăрлав патне пырса тăраççĕ.

ХĂЛАТ. Ей, кĕççепит, ну кам кама çĕнтерђĕ?! Ну, кам паттăртарах. Çапла тăваççĕ сирĕн пек тăмçамкасене.

ЂĔРĔ ÇВЕТТУЙ. Ĕмĕр ылханлă пул, ађусем ылханлă пулђђăр çак саттана пурнăçĕшĕн. Антихрис помошнĕкĕ есĕ.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. А ђиркӳне çапах уçрăмăр. Вĕреçĕлен! Суратăп пуçу çине...

ÇĂРТТАН. Мĕн унпа... Тăм писмен!.. Аťăр ĕçме. Ну, Хăлат пиђђе, санăн пайан виç витре тăратмалла. Комунне хамăрах пĕтертĕмĕр. Ха-ха-ха! Пĕр самантра салатрăмăр. Малашне йађĕ те пулас çук.

ХĂЛАТ. Ес çакна вуласа пăх-ха, çакна вуласа пăх... (Х а ç а т н е т ы т т а р а ť, т у х с а к а й а ç ç ĕ. П ă р т а к т ă р с а н х у т к у п ă с к а л а с а а х ă р с а й у р л а с а й а р с а т е п ĕ р у р а м р а ç у х а л а ç ç ĕ).

XI.

ТĂРЛАВ. А, есĕр те вĕсемпе-и?! Кăтартăп еп сире. Çĕпĕре! Çĕпĕре сире... Пăлхав! Контрреволђутси! Ко-

мун йёркине çёмёрме. Ах, пуç çавăрăнса кайрĕ. Ўкетĕп... Йаркейĕв!.. Тытăр мана... Ах!. Çапах епĕ вăйлăха... Района, халех района... Унтан епĕр пуплĕпĕр вĕсемпе. (Т у х с а ђ у п а ў).

XII.

Кĕрет Лыккăв—йалсовет пуçлăхĕ.

ЛЫККĂВ. Куç шашарит тунă. Пурте хатĕр. (П ă х к а л а с а). Кăсем ăçта кайнă тата? Никам та курăнмасў. Те вара куђат тума тухса кайнă... Ей, Ваççа, Ваççа, куç тавнайах шашарит тунă.

XIII.

Ђупса кĕрет Тăрлав.

ТĂРЛАВ. Епĕ пур вĕсемшĕн çĕрĕн-кунĕн ĕçле. Йалан вĕсене ырă пурнăç тăвас тесе тăрăш. Ђимĕр-ха. Еп ђăмăртăп сире çакăнта. Пĕкĕ пек авса хурăп. Контр-револђутси! Пурне те Çĕпĕре! Пурне те тĕрмене! Тĕрмерех çĕртетĕп. Кам кама?! Кăтартăп-ха епĕ хама.

ЛЫККĂВ. Куç шашарит тунă. Такçанах хатĕр.

ТĂРЛАВ. А, есĕ кунта-и?! Еп сана такçанах шыраттăм. Акă сана куç. (М ă й н е п ă в а ў).

ЛЫККĂВ. Хурах! Вĕлереççĕ! Хурах!

**4-мĕш пайĕ.**

I.

Теккоратси иккĕмĕш пайĕнђийех.

Халăх. Иçмасса, Паранкă Куçми, Çивђĕ Перо, прикатирпа проккурор малта.

ИÇМАССА. Пыратăп çапла çулпала танклаттарса. Инçе те кайман, иçмасса. Килĕççĕ иккĕн хирĕç

пĕри çакă, тепри çак йулташ. Ну, конешнă, тӳрех кăсем мана ђараççĕ те: ăçталла, кам çыннине пĕтĕмпех тĕпђесе пĕлеççĕ. Епĕ хам та ыйтатăп. Вăт, тăвансем, халĕ ку йулташсене хамăр ĕçе тĕрĕслеме йертсе килтĕм ĕнтĕ кунта...

ПАРАНКĂ. Пĕри прикатир, тепри проккурор терĕни-ха?

ИÇМАССА. Самăй çавсем, самăй çавсем, Паранкă йулташ.

ХАЛĂХРАН. Епĕр вĕсене, хаклă хăнасене кĕтнĕ пекех, такçанах кĕтнĕ.

ИÇМАССА. Пур ĕçсем çинђен те, тăвансем, пĕтĕмпех каласа патăм. Мĕнле йур хыртарни çинђен, мĕнле сорттироваť туни, а, клавнăй, йулташсем, пире хăратса пĕтерни çинђен, прĕксĕрех суйа комун туни çинђен каларăм.

ПАРАНКĂ. А, каларăни, мĕнле вĕсем карђăксемпе стариксене мăшкăласа кимнаçтĕк тутарни çинђен. А хăна раскулађђĕт туни çинђен?.

ИÇМАССА. Иçмасса сан пек шкул пĕтернĕ пулсан, ăçтан епĕ пурне те пĕлем-ха?

ПЕРИ. Тата поткулађнĕксене те тăрă шыва кăларас... Çветтуй вота шывĕпе Çăрттан Çитăрĕ те ĕçе нумай пăтратрĕç. Вĕсем пăлхатрĕç халăха.

ИÇМАССА. Ăçтан пурне те астăвам-ха... Ман саписной кĕнеке çук вĕт. Хăвăр та калăр.

ÇИВЂĔ ПЕРО. А, каларăни, кулак Хăлата комуна илни çинђен, Ђĕрĕ Çветтуйа шђеттовота лартни çинђен... Вĕсем хĕтĕртнипе колхос ĕçĕн йатне çĕртни çинђен. Вăт çакăн çинђен каламаллађђĕ.

ИÇМАССА. Вăт калăр çав ĕнтĕ халĕ пурне те...

ПАРАНКĂ. А тата вĕсем вăтамсене, ђухăнсене раскулађђĕт тунă. Вăт мĕнле.

ИÇМАССА. Калăр, калăр ĕнтĕ пĕтĕмпех...

ХАЛĂХРАН. И колăс лишшай тунă айăпсăрах. Авă пирĕн йалкора ахалех сасăсăр хăварнă.

ÇИВЂĔ ПЕРО. А кам вĕсем йышăннине пăхăнай?..

ХАЛĂХРАН. Пăхăннă вĕт халиђђен.

ИÇМАССА. Ну, тăвансем, епĕ хам токлата пĕтертĕм.

## II.

ПРОККУРОР. Ну, йулташсем, халĕ Иçмасса пире каласа пађĕ Тăрлав йĕркисем çинђен. Епĕр унђен те илтнĕ. Хаçат урлă та темиçе хут çырса пĕлтернĕ. Акă сире пĕрне вуласа парам. Сирĕн йал çинђен çырнă кунта. (в у л а й): Вăл Тăрăн пуçĕнђе хăйне хăй патша пекех тыткалай. Февралĕн 5-мĕшĕнђе ерех ĕçсе тухай те йалсоветсĕр мĕнсĕр «Кам колхоса кĕмест— раскулађђит тумалла» тесе прикас парай. Çапла вара кулаксемпе пĕрлех 13 кил вăтамсене раскулађђĕт тăваççĕ.

Унтан Тăрлав раскулађђĕт тунисен йапалисене сутма пуçлай. Унтан пысăк хуран лартса «столовăй» уçай. Унта ним виçине пĕлмесĕр хăйĕн йулташĕсемпе какай, çу, пыл çиме тапратай. Йалсовеђĕ: пурлăха апла салатмалла мар тесен,—«Йа советы не приснайу» тесе хурай. Колхоса хăратса кĕртет. Раскулађђĕт тума май килменнисем çине укçа хурса тӳлеттерет. Павăл Миххайлăва, вăтама, вăл—колхоса кĕмест тесе укçа хурса лашипе ĕнине суттарай, ревиçи комиççи претçетаттĕлĕ—вăтам хресђен А. Савелйĕв çине 150

тенкĕ тӳлев хурат̆. Ђухăнпа пĕрех ватам Шулеке Иванĕ çине 100 тенкĕ тӳлев хурат̆. Йалта сăмах ђĕнме çук решим туса хурат̆. Хăшпĕр çынсем аплах йурамаст̆ пуљ, тесен, «замолчи замри, ато!..» тесе çухăрса хăратса пăрахат̆. Колхоçнĕксене, ђухăнсене йăлтах хăратса пĕтерсе, мĕн тăвас тенĕ çавна тăват̆.

Çивђĕ перо.

ХАЛĂХРАН. Ха-ха-ха! Пăх-ха, пăх-ха, мĕнле тĕрĕс çырнă.

ПАРАНКĂ. А шăп кунта пирĕн туссем çинђен çырнă.

ПРОККУРОР. Çавсем çинђенех çав. Тата мĕн хушмалли çуки? Пурте тĕрĕси? Суйа çырмани.

ХАЛĂХРАН. Тĕрĕс.

ПРОККУРОР. Ман шутпа, кун пек çынсене партти ĕçне пăсса, совет йатне çĕртсе халăха пăтратакансене сут умне тăратса ответ тыттармалла. Епĕ халех вĕсене хулана ăсататăп. Унта вĕсене топрос туса сут умне тăратĕç. Ахалех хăварма йурамаст̆ вăл ĕçе. Çапла-и, тăвансем?

ПАРАНКĂ. Вăт ку тĕрĕс решени. Кун пек решшенишĕн сана тав.

ПРОККУРОР. Йалсовет претçетаттĕлĕ пури кунта?

ХАЛĂХРАН. Çук. Ђирлĕ вăл. Вилес пекех выртат̆.

ПАРАНКĂ. Пĕркун комунран салаппине курнă та хăраса анкăминкĕленсе кайнă. Ахăрсаманапа темле аташат̆. Пит шел. Пит лăпкă етемђђĕ.

ПРОККУРОР. Самеçтиттĕлĕ пуртăр апла?

ХАЛĂХРАН. Самеçтиттĕлĕ пирĕн Паранкă Куçми, çавна суйланăђђĕ.

ПАРАНКĂ. Неуштă епĕ? Виçĕм çулах суйланă пекђĕ. Неуштă халĕ те епĕ?

ХАЛĂХРАН. Есĕ, есĕ.

ПАРАНКĂ. Хм. Апла пулсан йурĕ. (М а л а т у х с а) Йалсовет пуçлăхĕн самеçтиттĕлĕ епĕ.

ПРОККУРОР. Апла пулсан, ђĕнсе килĕр кунта Тăрлав Ваççилипе Йаркейĕва, тата Пырккков-Пушкĕна... Ђĕрĕ Çветтуй, теççĕ-и-ха сирĕн—çавна та, тата Хăлата та илсе килĕр.

ПАРАНКĂ. Ехе. Вон оно што. Топперђђă йа понимайу. Шивым манером еп вĕсене. Аҭа, Иçмасса. (Т у х с а к а й а ç ç ĕ).

III.

ПРИКАТИР. Ну, халĕ мана парăрха, йулташсем, сăмах.

ХАЛĂХ. Аҭа, кала, кала.

ПРИКАТИР. Тĕнђе кулли пулса тăнă сирĕн кунта. Темле, ђăнахах, «ахăрсамана» çитсе тăнă кунта. Кулă та, йĕрӳ те пур кунта. Мана хулара партти комиттетĕнђе сирĕн ĕçсем çинђен каласа пађĕç те тĕлĕнсех кайрăм. Кунта çитсен, калаçса пĕлтĕм те, тата ытларах тĕлĕнтĕм. Проккурор калани пит вырăнлă, йулташсем. Кунта тăм çамкасем сиртен мăшкăласа кулнă, халĕ ответ ĕнтĕ тытма пĕлђђĕр. Ларђђăр-ха пăртак шурă çуртра.

ХАЛĂХ. Тĕрĕс! Тĕрĕс!

ПРИКАТИР. Кунта вĕсем темле усал ĕç те, темле пăсусем те тунă. Парттипе влаç кăтартса пынисене пĕтĕмпех пăсса пынă. Партти калаҭ: талкăшпех колхоса куçса кулака класĕпех пĕтермелле, тет. Вĕсем кулака колхоса илеççĕ... А кулак вăл ђи тискер, усал

експлоаттатăр. Вĕсем етем истори тăршшĕнђе темиçе хутђен те улпутсене, патшасене, пупсене, кăпиталçăсене влаç кўртсе панă. Çапла калана пире Влатимĕр Илђйиђ. Влатимĕр Илђйиђ пире ђухăнсем çине тайăнса, вăтам хресђенсемпе сойус тытса кулаксене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешмелле, тенĕ. А, сирĕн кунта çелсовета кулаксем çавăрса илме тытăннă, вăтамсене те, ђухăнсене раскулађђĕт тунă, а ђăн кулаксем йулнă. Пуппа çыхăнса кайнă.

ХАЛĂХРАН. Шђетовот пулђĕ вăл пирĕн.

ПРИКАТИР. Вĕсем пулĕç. Нихăçан та кулакпа хутшăнмалла мар, вăл пирĕн тăшман. Унпа хутшăнсан, вăл ĕнсе çине лараĭ-ларатех.

ХАЛĂХРАН. А, лармасăр, ларатех. Ав Çăрттан Çитăрĕпе Çветтуй вота шывне кўлсе ĕрĕхтерсех çўрерĕ. Вĕсем ђейе.

ПРИКАТИР. Тата колхоса ирĕксĕрлетсе кўртме нийепле те йурамасĭ. Ленин ун çинђен пире акă мĕнле вĕрентрĕ:

«Вăтам хресђене ирĕксĕрлени вăл калама çук пысăк сийен. Вăтам хресђенĕн сийĕ нумай йышлă, нумай мĕлйунлă. Йевропра та, унта вăл нихăçан та пирĕн патăрти пек пысăк вăй пулайман, унта технĕккăпа куђттурă, хула пурнăçĕ, ђукун çулсем пит мала кайнă пулин те, унта çавăн çинђен шутлама çăмăлтарах пулин те,—револђутсиллĕ сотсиалиссенђен пĕри те нихăçан та вăтам хресђенсене ирĕксĕрлесси çинђен сăмах тапратман. Кунта ирĕксĕрлеме хăтлании пĕтĕм ĕçе пĕтерме пултараĭ... Вăтам хресђенсене хуçалăх çыхăнăвĕ тĕлĕшпе ирĕксĕрлесси çинђен шутланинђен ухмаххи урăх нимĕн те çук».

ХАЛĂХРАН. Çавăн пек пире вĕрентекен çук çав. Влатимĕр ИлЪйиҫ вăл пирĕн пурнăçа çăмăллатасшăн çеç тăрăшнă. Йе пире каласа ăнлантаракан пулсан...

ПРИКАТИР. Тăрлавсем тунă ĕçсем те Ленин каланисене хирĕç пыраççĕ. Вĕсем пĕри те тĕрĕс мар...

Халҫхи вăхăтра епир ҫи пысăк сатаҫ умне çитсе тăтăмăр. Вăл сатаҫ—классене пĕтерессп, **рапоҫҫипе хресҫен хушшинҫи уйрăмлăха пĕтересси, пурне те ĕçлекен çын тăвасси.** Ăна пĕр тăрукăх туса хума çук. Ку сатаҫ танаштарма çук йăвăрскер, нумайҫҫене пымаллискер. Ку сатаҫа тĕппипех татса тăвас тесен пĕр-пĕр класа пĕтерниех çитмест. Ăна тăвас пулсан—пĕтĕм опҫествă хуçалăхне улăштармалла, уйрăм, сапаланҫăк, **вак таварлă хуçалăхсене шултра хуçалăх туса пĕрлештермелле,**—акă мĕнле вĕрентет Ленин.

Çак сатаҫсене ăнăçлă тума тытăнни, туса пыни хресҫенсен тĕп масси колхос йенелле çавăрăнинҫен, вĕсем хăйсен хуçалăхне пĕрлештерес çул çине тăнинҫен килет. Çаксем пулмасан, атминистратсиллĕ ĕçсемпех хăтлансан, сотсиалисăм тăвайас çук.

Çак атминистратсиллĕ ĕçлекенсем пирки Сталин йулташ хăйĕн «Çитĕнӳсем пирки пуç çаврăнни» йатлă статйинҫе акă мĕн калаҫ:

«Колхоса кĕмен хресҫенсене, хĕçпăшаллă вăйпа, уйа шыв памастпăр тесе хăратнисем пулни паллă. Çакăн пек Унтер Пришшипейĕв «политтĕкĕпе» вырăнти условисене шута илсе, хресҫенсен хăйсен ирĕкĕ çине тайăнса тăракан партти политтĕкĕ хушшинҫе йепле пĕрлĕх пур ĕнтĕ? Паллах, вĕсен хушшинҫе нимĕнле пĕрлĕх те çук, пулма та пултараймасҭ. Политтĕке

çакăн пек пăснисем, колхос йухăмне ђиновникле текретлани, хресђенсене çакăн пек ниме йурăхсăр хăратнисем кама кирлĕ йапала вăл?! Пирĕн тăшмансемсĕр никама та кирлĕ мар! Çакăн пек ĕçсем ăçталла илсе кайма пултараççĕ-ха? Пирĕн тăшмансене тĕреклентерме, колхос йухăмĕн шухăшне çĕмĕрсе тăкма пултараççĕ».

ХАЛĂХРАН. Конешнă, ун пек пулсан пирĕн тăшмансене çеç усă...

## IV.

ИÇМАССА (ђупса пырса). Килеççĕ, килеççĕ...

ПАРАНКĂ. Акă, илсе хилтĕмĕр. Ей, халăхсем, пăрăнăр-ха пăртак.

ПРОККУРОР. Пурте-и?

ПАРАНКĂ. Пурте...

(Тăрлавпа унăн ушкăнĕ ĕретне тăрса тухаççĕ).

## V.

ПРОККУРОР. Сире пурне те колхос ĕçĕнђе пăтратусем тунăшăн, колхос йатне çĕртнĕшĕн хулана йаратăп. Унта сиртен ыйтса пĕлĕç. (Халăха). Вĕсем йалсоветне хăйсен аллине çавăрса илнĕ курăнаť. Претçетаттĕл массăпа хутшăнса ĕçлеменнине, çемçешке тата пĕђђен, хăй тĕллĕн ĕçленине сиснĕ. Усă курма пĕлнĕ. Çавăн пек ђейе вăл тăшман... (Паранкăна). Йулташ претçетаттĕл, ăсатăр халех вĕсене хулана.

ПАРАНКĂ. Халех. Халех.

ПРОККУРОР. Йалсовет ĕçне те каплах хăварма йурамасť малалла. Ун çинђен уйрăм ыйту лартма тивет.

ТĂРЛАВ. Мана мĕншĕн тата. Епĕ комун тунă вĕт. Ман пек комун ниçта та пулман.

ПРОККУРОР. Çавăншăн та йаратпăр хулана.

ЙАРКЕЙЁВ. Йулташ проккурор, а мана мĕншĕн? Ман ĕç кимнаçтĕк вĕрентни çеç пулнă.

ПРОККУРОР. Йурĕ, йурĕ, унта тĕрĕслĕç.

ХĂЛАТ (й ĕ р е т). Çав çыншăнах пĕтетĕп ĕнтĕ. Вăл пур вут тĕртсе çунтарать, есĕ ответ тытаканни. Йулташ прокурор, епĕ мар ăна—Çăрттан Çитăрĕ. Епĕ комун тума хушрăм, анђах халăхĕ ухмах пулђĕ. Тем йурамарĕ.

ХАЛĂХ. Ђарăн кĕççепит. Йытă!.. Тăшман! Илсе кайăр вĕсене хăвăртрах.

ПАРАНКĂ. Ну, лавсем хатĕр пуђ ĕнтĕ. Атăр-ха. Кайса килĕпĕр пĕреххут.

ИÇМАССА. Иçмасса, сывă пулăр, тесе пĕрех хут каласђĕ... Атту кайаççĕ. Хе-хе-хе!

ТĂРЛАВ. Йа вĕт йа, йа вышĕ ђентра, йа вышĕ сута... Есĕр мана хулана, кăтартăп ха епĕ сире хам алла.

(Х а л ă х с е м ш ă х ă р а ç ç ĕ).

## VI.

ИÇМАССА (м а л а т у х с а). Ну епĕ сире тата тепĕр токлат калам-ха. Ну, калăпăр, сĕлĕ ўсет. Ну, сĕлĕ. Тем ђухлĕ ун çинђе çум ђеђекĕсем, курăксем. Вĕсем пурте сĕлĕрен çўлерех ўссе кайса, ăна пусаççĕ. Сĕлли ђирлеме пуçлать, а çум ђеђеккисем илемлĕн кашласа çутăлса лараççĕ. Çутă, илемлĕ, куç савăнать. А сĕлли? Сĕлли илемсĕр. Авă çавăн пекех мĕнле паттăр, патвар, илемлĕ çынсем тухса кайрĕç. А усси

мӗн? Тӑшман вӗсем. Мӗнле ҫум куракӑсене шеллемесӗр ҫӑлса пӑрахатпӑр, кӑсене те ҫавӑн пекех ҫӑлса пӑрахмала. Вот ман шухӑш. Ман пӗтрӗ.

ХАЛӐХ. Ха-ха-ха. Иҫмасса Хӗветӗрӗ калӗ вӑл.

ИҪМАССА. Иҫмасса хуй ҫавна калас, атту тек ђӗрере йӗкӗлтесе тӑрай...

ПРИКАТИР. Ха-ха-ха! Ҫапла, ҫапла. Ђӑнахах. Тӗрӗс. Ҫумне ҫӑлса пӑрахмасан, тырри ӳсес ҫук.

## VII.

ПРОККУРОР. Ну, йулташсем, епӗ уттаратӑп хуланалла. Сирӗнпе кунта акӑ йулташ прикатир йулай. Вӑл рапођђи, вӑл нумай пӗлет, вӑл сире пурне те йӗркелесе парӗ... Сирӗн кунта нимрен малтан йалсовет ӗҫне вӑйлатмалла. Сӳрӗк ӗҫленӗшӗн йат та кирлӗ. Претҫетаттӗле халӑх ҫинђе токлат тутарӑр. Тӗплӗ сӳтсе-йавса тишкерӗр. Ку тӗлӗшпе прикатир сире пулӑшӗ. Йал ҫинђе йӗркесӗрлӗхсем пулсан, тӳрех хулана. Епӗ ђасах сирӗн ӗҫсене тӗрӗслесе парӑп. Сывӑ пулса йулӑр-ха.

ХАЛӐХРАН. Ну, спаҫҫипах сана пирӗн ӗҫе татса панӑшӑн.

(Т у х с а к а й а й).

## VIII.

ПРИКАТИР. Ман сире ӑнлантармалли тата пур-ха. Итлӗр-ха, йулташсем, кунталла, ман паталларах куҫӑрха. Еп шутлатӑп ҫакӑн пек. Сирӗнтен кунта ӗҫсене пӗрлешсе, ушкӑнланса тӑвассине, пӗр пысӑк хуҫалӑх тӑвассине хирӗҫҫи никам та ҫук пуљ тетӗп епӗ. Ку ӗҫ ҫинђен есӗр темиҫе хут та сӳтсе-йавнӑ ӗнтӗ.

ИÇМАССА. Пĕртте хирĕç мар епĕр ăна, апђах пире унти йĕркесем çинђен тĕрĕс каласа памаççĕ-çке, йулташăм. Çавна пĕлесђĕ пирĕн. Пионерсем пуплеççĕ те, кам итлетĕр вĕсене. Акă хамăн та Петĕркке шкула ђупаť...

ПРИКАТИР. Вăт, йулташсем, мĕн. Ђи, пирвай, комун йĕркине малтанах йышăнмалла мар. Комун йĕрки мар, ертел йĕркипе ĕçлемелле. Ертел ђухне есĕ килтех, çĕре çеç пĕрле ĕçлетĕн. Хăвăн хатĕрӳсем хунах. А комун йĕркине пĕлес пулаť-ха ăна. Авă есĕр пĕлмен те, сирĕн кулă çеç пулнă. Кулă комунни! Ак кунта ман ертел уставĕ пур. Ӳнта пурне те татсах каласа панă...

ИÇМАССА. Епĕ хам та çав ертел йенелле сулăнатăп. Ну çавăнпа та, тăвансем, аťăр ертел тăвар и çав ертеле пурте çырăнса çĕнĕ пурнăç тума пуçлар. И пулни ирттĕр, пулассине хамăр тăвар. Çыр мана, йулташ, ертеле.

(Çивђĕ перо, ђухăнсем, вăтамсем, пурте пырса çырăнаççĕ. Хыçалта пуçĕсене тайса Çăрттан Çитăрĕпе Çветтуй вота шывĕ çеç йулаççĕ).

## IX.

ПРИКАТИР. Кусем тата мĕн пуçĕсене ђиксе тăраççĕ. Неуштă ăнланайман, йе ертеле çырăнасшăн мар?

ИÇМАССА. Вăт мĕн йулташ. Кусем иккĕшĕ те пирĕн йалта самăй первай пролеттарисем. Ку Çăрттан Çитăрĕ—çăртанĕнђен пуçне урăх ним те çук. Ку Çветтуй вота шывĕ, тетпĕр. Ун пек тĕне йуратакан Амерĕкре те виççĕн çеç, теççĕ. Кĕлле çӳреме йуратаť.

Çак хађ илсе карĕç-çке, Хăлат, тенĕ кулака, çав Хăлат ĕнтĕ çаксене ну йăпатса-и, парнесем парса-и унта хăй майлă çаварса халăха пăтраттарђĕ. Кусем пăтратакансем пулђĕç.

ÇĂРТТАН ÇИТАРĔ. Тӳрех кала ĕнтĕ, мĕн тăсса тăран, поткулађнĕксем кусем, тесе. Ех, намăс мана халăх умĕнђе... Каçарăр, тăвансем, хам ирĕкпе мар, тăшман ирĕкĕпе. Урăх нихăçан та...

ИÇМАССА. Мĕн пире. Епĕр пĕлетпĕр вĕт кам тӳткипе ташланине.

ÇĂРТТАН. Илĕр мана та ертеле.

ПРИКАТИР. Çырас-и, йулташсем?..

ХАЛĂХРАН. Çырмасăр? Çырас, çырас. Пуршуй тавраш мар вĕт.

ÇĂРТТАН. Нихăçан та ĕнтĕ кулак майлă пулас çук.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. Епĕ те çырăнасшăн ертеле.

ХАЛХĂРАН. Çырас, çырас.

ИÇМАССА. Анђах есĕ, Çветтуй вота шывĕ, лешне, çуттине йухтарма пăрах. Ертеле кĕрсен, йурамĕ.

ХАЛĂХРАН. Ха-ха-ха! Иçмасса калаçĕ вăл.

ÇВЕТТУЙ ВОТА ШЫВĔ. Кам вађђи тунă? Сан вађђи-и? Хăлат вађли тунă. Хал ĕнтĕ тек тумастăп.

ИÇМАССА. Апла пулсан йурать...

(Йурлани илтĕнет. Пуху патне хĕрарăм ушкăнĕ кĕпĕрленсе çитет).

## X.

ПРИКАТИР. Кусем тата мĕнле халăх?

ХĔРАРĂМСЕНЂЕН ПĔРИ. Ертеле çырăнма килнĕ халăх... Ей, есĕр пирĕнсĕрех ертел тăвасшăни?

ПРИКАТИР. Ертеле тĕк хапăлласах йышăнатпăр...

ХЁРАРӐМСЕНҪЕН ПĔРИ. Ҫыр-ха еппин ертеле...
ТЕПРИ. Мана та...
ВИҪҪĔМĔШĔ. Мана та...

(Пурте ҫырӑнаҫҫӗ).

## XI

Хӗрарӑмсем тӑрса тухаҫҫӗ те йурлама пуҫлаҫҫӗ.

Йешӗл иккен вӑрман тӑршшисем,
Йешӗл иккен вӑрман тӑршшисем,
Илемлӗ иккен Пӑла тӑршшисем,
Маттур иккӗн Ҫакӑ ай аҫисем,
Маттур иккӗн Ҫакӑ ай аҫисем,
Кӳреҫ иккен ай туй илемне.

Тӑри тӑрса кайрӗ, ай куртӑри,
Тӗкӗ ӳксе йулҫӗ илтӗри?
Ҫака туйӗ килҫӗ, ай куртӑри?
Алри ӗҫе пӑрахса ҫупрӑри?
Астӑвӑр-ха Ҫакӑ ай аҫисем,
Ҫӑпатине кутӑн сырмани?

Мӗншӗн йурламастӑр, ай, аҫасем?
Сирӗн йурлассӑра кам пӗлмест!
Унҫҫен йӑпататтӑр ай ҫӗлхӗрпе,
Улталаттӑр ҫӑвара куркӑрпа.
Мӗншӗн шӑппӑн шӑппӑн ай йурлатӑр?
Есӗр шӑпҫӑк ҫӗппи мар вӗтӗ!
Мӗншӗн тӑррӑн тӑррӑн ай тӑратӑр?
Есӗр тӑри ҫӗппи мар вӗтӗ...

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. экз. № 25.

## XII.

ИÇМАССА. Çăрттан! Ей, Çăрттан Çитăрĕ! Хут купăсна ил те тух кунта...

ÇĂРТТАН. Хам та аран ђăткаласа тăратăп та... Ей, халăх, пар-ха мана мала тухма...

(Тухаҫ те çĕлĕкне çĕре хывса пăрахаҫ, купăс калама пуçлаҫ).

ИÇМАССА. Ну, хĕрађасем манпа, старикпе, ура хуçса...

ХĔРАРĂМСЕНЂЕН ПЕРИ. Айта пошла...

(Ташлаççĕ, халăх алă çупса савăнса тăраҫ).

ИÇМАССА. Ну, мана, старике, çитĕ. Çамрăкраххисем, есĕр тухăр-ха.

(Ташлаççĕ, савăнаççĕ, шавлаççĕ).

## XIII.

ИÇМАССА (прикатир патне пырса). Ну, йулташ, сана йамастпăр ĕнтĕ хулана. Кунтах хăваратпăр, хамăрпа пĕрле. Ак авлантарăпăр. Ха-ха-ха!

ПРИКАТИР. Есĕ авлантарăн та. Есĕ пултарăн.

ИÇМАССА. Иçмасса, туйĕнђе ташлăттăм.

## XIV.

ЛЫККĂВ (мала тухса). Йалсовет пуçлăхĕ Лыккăв. Нийепле те ђăтаймарăм. Выртнă çĕртенех тăрса килтĕм.

ИÇМАССА. Ну, мĕнле сывлăхсем сан, Терентти Куçмиђ?..

ЛЫККĂВ. Сывлăхсем ниђђехо, ниђђехо-ха. Еçсем те.

ИҪМАССА. «Куҫ шашаритсем» тата санăн йепле пыраҫҫĕ?

ЛЫККĂВ. Ан та шарла. Хăлатсемпе Тăрлавсем кыҫҫăн кайса, кăштах ђĕп ҫĕклен хурђăкана тухмарăм имĕш. Айăплă епĕ. Халăхран каҫару ыйтасшăн.

САСĂСЕМ. Каҫарас! Ҫук! Хăлатсенђен иртеймерĕ те. Мĕн унпа хаљ калаҫас! Иртсе кайтăр—ертел тунă йађĕпе.

ИҪМАССА. «Куҫ шашаритсене» пăрахма вăхăт ĕнтĕ, Лыккăв йулташ. Ăна хăвах йышăнатăн. Каҫарасси мĕнĕ—кайран сўтсе йавăпăр. Проккурор та халăх ҫинђе токлат тутарса пăхса тухма хушса хăварђĕ.

КАРЂĂК (иртет). Ҫилсĕр-ҫунатсăр, хăй тĕллĕн ҫăмахпа кукăљ авăртакан арман кĕмсĕр-кĕмсĕр туса ишĕлсе анђĕ, тет. Пĕрĕхсе сирпĕнђĕ тет ҫўлелле хĕлхемĕ. Шăтса тухрĕ тет хĕп хĕрлĕ илемлĕ ђеђек. Халăхсем мана та ҫырăр ертеле.

ХАЛĂХ. Ҫырас, ҫырас. Парки арăмĕ те колхоса кĕресшĕн.

## XV.

Стсенă ҫинђи халăх стройпа йĕркеленсе тăрат̆. Йалав сиксе тухат̆. Йалав ҫинђе лосăнк: ЕПĔР ТЕ СОТСИАЛИСĂМ ТУНĂ ҪĔРЕ ХУТШĂНАТПĂР.

ХĔРАРĂМ (ађаллăскер). Петĕр, Йакку, Уҫăп, Иван, Ҫеркей... Ăҫта сĕтĕрĕнеттĕр. Шалт аптранă епĕ сирĕнпе... Халăх ҫине тухма та ҫук... Аййуй! (йĕрсе йарса, стсенă ҫинђен тухат̆).

СТАРИК. (Пĕр ушкăн йĕркепе тăрса тухнă старикСемпе карђăксем илсе кĕрсе). Роттă, стой! (прикатир патне пырса). Пурте ҫĕнĕрен ертеле ҫырăнасшăн...

ИÇМАССА (мала тухса). Ура!

ХАЛĂХ. Ура!

ИÇМАССА. Вăт сире и ахăрсамана! Пар аллуна, тăван (алă тытаççĕ).

ПРИКАТИР. Йулташсем, йулашки сăмах. Епĕр пĕр пысăк ĕçе маннă: пирĕн ертел планне тумалласке. Плансăр-мĕнсĕр пирĕн ертел ĕçĕ мала кайас çук. Тĕрĕси ман сăмахсем?

ХАЛĂХ. Тĕрĕс.

ÇИВЂĔ ПЕРО. Апла пулсан пирĕн ку ĕçпе прикатă уйăрас.

ПРИКАТИР. Кама суйлăпăр.

ХАЛĂХ. Хăна! Иçмассана! Йалкора!

ПРИКАТИР. Йышăнатпăр пулĕ. Пайан каçхине пухăнăпăр еппин.

ИÇМАССА. Сывă пултăр пирĕн, ђăн-ђăн çулпа, Ленин кăтартнă çулпала пыракан колхос!

ХАЛĂХ. Ура! Урра! Урррра!

(Кармуђ марш калат̆. Пурте савăнăçлă. Ђаршав йерипен хупăнат̆).

Цена 30 коп.

Ст. Лашман. ЗЕМЛЯ ДЫБОМ

Сатиристическая комедия в 4 действиях

Чувашское Государственное Издательство

Чебоксары — 1931